ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

8 (4370) №, 2014, нарăс, 27 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ПУЛТАРУЛЛĂСКЕР

## «Çемçе пукан илĕртет...»



Виççĕмĕш класра вĕренекен Саша Никоноров пур енĕпе те пултаруллă. Вĕренӳре малтисен ретĕнче, «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пырать. Музыкăна та килĕштерет, пушă вăхăтра баян калама кăмăллать. Спорта та чунтан парăннă. Йĕлме-йĕлтĕр ăмăртăвĕсенче ăна çитекен çук.

– Анне те, Ольга Николаевна, атте те, Владимир Иванович, тренерсем. Аннем Раççей шайĕнчи тупăшуран та пĕрре мар çĕнтерӳпе таврăннă. Вĕсемпе эпĕ чăнласах мăнаçланатăп. Çавăнпа спортра ӳсĕмсем тумасан мана юратнă çынсен умĕнче намăс та. Паянхи кун манăн 15 медаль, грамотăсен шутне вара пĕлместĕп те. Тĕрĕссипе, сăмаха ӳстермесĕр каласан, чапшăн, парне-наградăшăн çунмастăп. Панă япалана та илмесĕр турткалашса тăма халăм çук. Çуллахи кун ролика ураран хывмастăп. Шывра ишесси те маншăн хăйне евĕр уяв! Эх, чăмпăлтататăп вара ирĕклĕ пулă пек. Никам та хăваласа çитеймĕ мана! – хавассăн пуплерĕ хастар арçын ача.

Уявсенче куракана пултарулăхĕпе тыткăнлама та ăста Саша.

– Тата эпĕ каласма юрататăп. Çăвара шыв сыпса ларасси – маншăн ют! – тет хавассăн.

Чăн та, арçын ача нихăçан та кӳрше сăмах ыйтма каçмĕ. Ватăпа ватăлла, ачапчапа ачалла мĕн тери хитре пуплеме пĕлет вăл.

– Сценкăсенче пĕр-пĕр сăнара калăплама юрататăп. Ун пек чухне вара хама чăн-чăн артист вырăнĕнче туятăп. Анчах ӳссен манăн сцена ăсти пулас килмест. «Газпром» директорĕнче вăй хурасчĕ. Паянхи кун вĕренӳре «5» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пыратăп та пуçлăх пулаятăпах пулĕ тетĕп. Çемçе пукан çинче ларса курас килетех манăн. Эпĕ илтнĕ тăрăх унта шалăвне те сахал мар тӳлеççĕ. Нухратне нумайрах ĕçлесе илсен килтисене те пулăшма аван, – хăй шухăшĕпе хаваспах паллаштарчĕ Саша Никоноров.

Мал ĕмĕтлĕскер халь çине тăрсах кĕнеке вулать, задача шутлать, тавра курăмне ӳстерес тесе тăрăшать.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА*.**

Канаш районĕ,
Карăклă шкулĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

**Шăнкăр-шăнкăр, ай, шыв юхать,**
**Шывпа юхма, ай, турпас мар,**
**Выртса юлма, ай, шур чул мар,**
**Килте ларма, ай, ват çын мар,**
**Пурте «Тантăшпа», «Теттепе»,**
**«Самантпа» туслашнă чух**
**Çырăнмасăр юлас мар!**

## *Паянхи кăларăмра:*

**4 стр.**



*Денис Зайцев халех Президент пулас тĕллевлĕ*

**8 стр.**



*Халăх çыравçин çамрăк ентешĕсем Алентейрен пултарулăхра юласшăн мар*

**9 стр.**



*Концертрах кушак çурипе выляма пуçланă Моцарт*

# Юрать-ха тивмерĕç

Ленинград хулине блокадăран ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине анлă паллă турĕ пирĕн çĕр-шыв. Эпĕ Ленинграда 1971-мĕш çулта атте парнеленĕ путевкăпа кайса курнăччĕ. Пире паллă вырăнсене экскурси автобусĕпе илсе çӳрерĕç. Хулапа паллашрăмăр, музейсенче пултăмăр. Тĕрлĕ палăк, Эрмитажри экспонатсен, Петродворецкри фонтансене курса тĕлĕнтĕмĕр. Пĕр кунхине ятарласа Пискаревскри мемориал масарĕ çине та илсе кайрĕç. Таня Савичевăн тăванĕсем вилни пирки çырса пынă блокнот страницисене вулани яланлăхах асра юлчĕ. Çăва çинче вăрçăра пуç хунисене йĕркипе пытарнă, тăпра умĕнчи плита çине хăш çул вилнине кăна палăртнă. Килен-каян палăк умне чĕрĕ чечексем хурать. Хула урамĕнче вăрçă вăхăтĕнче фашист бомбинчен пытанмалли путвал та упранса юлнă.

Санкт-Петербургра иккĕмĕш хут пилĕк çул каялла пулса куртăм. Хулара усăлса çӳреме те вăхăт тупрăмăр. Каçхине Нева çийĕнчи кĕпер еплерех уçăлнине те, "шурă каçсене" те куртăмăр.

Тăванăмăн хунямăшĕ – пирĕн гид. Сăмахлама юратакан ăшă кăмăллă хĕрарăм. Хăйĕн пурнăçĕ пирки те каласа кăтартрĕ.

Вăл Ленинграда вăрçă хыççăн пурăнма куçнă. Ун чухне хулари ишĕлнĕ çуртсене те юсаса çитереймен пулнă.

Евгения Никитична Горбунова малтанах трамвай çулĕсене çĕнĕрен юсанă çĕрте тăватă çул тăрăшать, унтан çур çул вĕреннĕ хыççăн тивĕçлĕ канăва кайиччене трамвай водителĕнче ĕçлет.

Смоленск облаçĕнчи Бохото ялĕнче çуралса ӳснĕскере тăшманпа тĕл пулма тӳр килнĕ. Вăл каласа панă нимĕçсемпе сыхăннă пĕр пулăм мана питех те тĕлĕнтерчĕ.

– Вăрçă пуçланнă çул эпĕ вун иккĕреччĕ, аппа çирĕм пилĕк, пичче вун ултă çултаччĕ, – сăмахне пуçларĕ Евгения Никитична. – Аппа пирĕн ялтан ултă çухрăмри яла качча кайнăччĕ. Вăрçă умĕн унăн мăшăрне çара илсе кайрĕç. Ун чухнех: "Вăрçă пуçланать," – тесе калаçкалатчĕç. Çапах та вăл чăннипех пуçланасса никам та шухăшламан.

Аппан икĕ ывăл: пĕри çулталăк çурăра, тепри виçĕ çулта. Мана вĕсене пăхма илсе кайнăччĕ.

Çав кун ирхине хĕвел ялкăшса тӳпене çĕкленчĕ. Пĕр учительница ял тăрăх: "Вăрçă пуçланнă!" – тесе кăшкăрса чупса анчĕ. Çанталăк та темшĕн тăруках улшăнчĕ, яла тĕтре хупласа илчĕ.

Кĕçех тӳпере самолетсем вĕçме тытăнчĕç, бомбăсем пăрахрĕç, пульăсем шăхăрни те илтĕне пуçларĕ.

Эпир путвала тарса пытантăмăр, унта ларма кансĕр, йĕпе, сывлăш нӳрĕ. Кăштахран аппа мана киле таврăнма хушрĕ.

Шикленсе, пуçа пĕксе утатăп, хирĕç мотоциклсем пĕрин хыççăн тепри иртсе каяççĕ, çав тери нумайăн. Мана асăрхамарĕç пуль, никам та тивмерĕ.

Яла çитрĕм, кунта фургонсем чарăннă, таврара чăх-чĕп, хур-кăвакал сасси янăрать – нимĕçсем каçхи апат пĕçереççĕ.

Каярахпа ял çумĕнчен хӳмеллĕ мотоциклсем иртсе кая пуçларĕç. Ачасем хăратчĕç пулин те вĕсене курма чупса тухатчĕç. Унччен мотоцикл тавраш курман-çке-ха.

Хурсемпе чăхсем пĕтсен салтаксем ял çыннисен ĕнисемпе лашисене пусма пуçларĕç, колхоз вильăкне те тирпейлесе çирĕç. Пĕр каçхине темиçе нимĕç пирĕн пата та кĕчĕ. Васкаса сарайне ухтарма тытăнчĕç, çак таранчен пытарса усранă сыснана курсан савăнчĕç. Ăна та пусса тирпейлерĕç. "Малашне мĕнле пурăнмалла? Ачамсене мĕн çитермелле?" – татăлса йĕчĕ анне.

Нимĕçсем фургонсенчех пурăнатчĕç. Пирĕн ял тавра вăрман çуккипе нумай вăхăт чарăнса тăмастчĕç, малалла тапранса каятчĕç. Кĕçех чун иллисем ял çыннисене тытса кайма пуçларĕç. Кăнтăрла яла кĕрлеттерсе килетчĕç те çамрăксене пухса çӳретчĕç. Нимĕçсене ялти сутăнчăксем хăш килте яш пурăннине пĕлтерсе яратчĕç. Аппа пиччене хăйĕн ялне вăрттăн илсе кайрĕ.

Совет çарĕ пирĕн яла тăшманран хăтарсан пичче 1943 çулта Тăван çĕр-шыва сыхлама тухса кайрĕ, вăрçă хирĕнче пуçне хучĕ.

Пирĕн ялтан инçех мар еврейсен ялĕсем пурччĕ. Фашистсем еврейсене ял çывăхĕнче чавнă окопсем умне тăрататчĕç те пурне те персе пăрахатчĕç. Никама та шеллеместчĕç.

Вăрçă хыççăн пĕр еврейка хăй ăнсăртран чĕрĕ юлни çинчен каласа пачĕ. Ăна икĕ ачипе пĕрле окоп умĕне персе пăрахнă. Вăл пепкисене ыталаса вилесем айне ӳкнĕ. Чĕрĕ юлнă. Çĕрле окопран шуса тухнă та икĕ ачаран пĕри сыввине асăрханă. Вĕсем хăрушă вырăнтан упаленсе тухса пытаннă.

Евгения Никитичнăна вăрçă кунĕсене аса илме çăмăлах мар пулин те, вăл калавне малалла тăсрĕ:

– Пĕррехинче фашистсем каллех яла килсе кĕчĕç. Эпир йăмăкпа кӳлĕ хĕрринче япала çăваттăмăр. Кĕтмен çĕртен пирĕн пата нимĕç салтакĕсен утса пычĕç, сăрă тĕслĕ кĕпесем хурса пачĕç, хăйсен чĕлхипе тем калаçрĕç – çуса пама хушрĕç пуль. Хăйсем аяккинелле пăрăнчĕç. Кĕпесене хăвăртрах çуса йывăç туратти çине çакрăмăр. Çав вăхăтра юхан шыв хĕррине кӳршĕ хĕрарăмĕ кĕпе чӳхеме аннăччĕ.

Эпир ĕçе пĕтертĕмĕр те килелле чупрăмăр, вăл юлчĕ. Вăхăт иртсен типнĕ тумтире пуçтарма кӳлĕ хĕрне килтĕмĕр те çухалса кайрăмăр – нимĕç кĕписем çук!

Каç енне тумтир хуçисем пирĕн пата çитрĕç. Хăйсен чĕлхипе кĕпесене тавăрса пама ыйтрĕç. Эпир ăнланман пек тăратпăр, пĕр сăмах та чĕнместпĕр. Ятлаççан-ятлаççан пăрăнса утрĕç. Эпир лăш! сывласа ятăмăр.

Çакна аса илсен халĕ те чĕре ура тĕпне çитет.

Смоленск хули çунатчĕ, самолетсем вĕççĕсе иртетчĕç, çунса ӳкетчĕç, çĕр-шыв тăшмана хирĕç кĕрешетчĕ.

Пирĕн çарсем çĕнтернине эпир самолетсем пăрахнă листовкăсенчен пĕлтĕмĕр.

1943 çулта шкулта вĕренме пуçларăмăр. Каллех окопсем чавтарчĕç, тавах турра, вĕсем урăх никама та кирлĕ пулмарĕç. Шкула хутса ăшăтма торф хатĕрлеттĕмĕрччĕ.

Вăрçă хыççăн Евгения Никитична Ленинградра пурăнма пуçлать. Пĕррехинче кану кунĕсенче яла таврăнать те кӳршĕ хĕрарăмĕн упăшкине тĕл пулать. Унăн пиншакĕ айĕнчен нимĕç кĕпи курăнса каять... Çунă тумтире кам йăтса кайнине тинех ăнланса илет Евгения Никитична.

– Тăван яла кайсан яланах çав кĕпесем аса килеççĕ, халĕ те унччен хăрушă самантсем чуна çӳçентереççĕ. Урăх нихăçан та вăрçă ан пултăрччĕ, эпир курни-тӳсни сире пырса ан тивтĕрччĕ, – терĕ ветеран сăмаха вĕçленĕ май.

*Галина ЗОТОВА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

# «Хăшĕ-пĕри укçана ачисенчен те мала хуни пăшăрхантарать...»



Çут çанталăка юрататакан çын кашни йывăç-курăка чĕрĕ пек курать, калаçать, амантасран асăрханать, ăнсăртран пĕр çулçине хуçсан каçару та ыйтать. Ăна чечексем çилленме е тарăхма, савăнма пултарнăн туйăнать. Кристина Полякова та çавăн пекех. Кам та пулин ӳсен-тăрана ним вырăнне те хуманнине курсан унăн чунĕ çав тери ыратать. Урамра çӳп-çап вытрнине асăрхасанах тирпей-илеме кăмăллаканскер ăна пуçтарма васкать.

Анат Тимĕрчкасси шкулĕнче тăххăрмĕш класра вĕренекен хĕр ачан чун киленĕçĕ ӳкерессинче. Ĕçĕсем ытларах чухне çут çанталăка сăнлаççĕ. Çавăнпах дизайнер ăсталăхне алла илес ĕмĕтпе çунатланса пурăнать вăл. Шкулти конкурссенче пĕрре мар çĕнтернĕ. «5» паллăпа çеç вĕренекенскер вулавăшри чылай кĕнекене «шĕкĕлчесе» тухнă та ĕнтĕ. Уйрăмах ăна Леонид Агаковпа Нелли Петровскан çырнисем килĕшеççĕ. Пĕри вăрçă темине анлă хускатнă пулсан, теприн юрату çинчен калакан хайлавĕсем илĕртеççĕ.

Вырăс чĕлхипе литературине тата тăван ен культурине тăрăшса вĕренекен Кристина предмет олимпиадисене хастар хутшăнать. Тăван ен культурипе пĕлтĕр виççĕмĕш вырăна тухнă. Районти вырăс чĕлхипе иртнĕ конференцире те палăрнă вăл. «Укçа тата чыс» темăпа тухса калаçнă. «Хăш-пĕр çынсем укçана ачисенчен те мала хураççĕ», – пăшăрханса калаçать Кристина.

Чылай конкурса хутшăннă май тĕпчев ĕçĕ иртерме хăнăхнă вăл. Çаппа майпа тăван тăрăхри спортсменсем пирки нумай пĕлнĕ. Хĕр ача хăй те спортпа туслă. Баскетбол, волейбол вăййисене пуринчен ытла кăмăллать. Сăмах май, шкул команди районта час-часах малти вырăна тухать. «Ушкăнра пĕр-пĕрне шанма тата ăнланма пĕлмелле, – тет Кристина. – Ун чухне çĕнтерӳ килетех». Ырă чунлă та ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче тăракан хĕр ача пурне те туслă пурăнма, йывăрлăхра пĕр-пĕрне пулăшма чĕнсе калать, çаппа туни лайăх кăмăл парнелессе ĕненет.

Асăрханă пуль, сут çанталăка юрататакансем чунĕпе таса, кăмăлĕпе йăваш. Кристина та пĕтĕм тĕнчене илемлĕрех тата телейлĕрех курасшăн. Ун пек çынсем çĕр çинче ытларах пулинччĕ!

*Лариса ПЕТРОВА.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2308 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 703
Пичете нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Сăкăт маттурĕсем

## Вĕрентекенрен ăша хывмалли чылай




Сăкăт шкулĕнче иртнĕ патриотла юрăсен конкурсĕнче пулса курни асăмран тухмастех. Çак уява Раççей гимнĕпе пуçлани те вырăнлă пулчĕ ахăртнех, пурте кар тăрса юрларĕç. Мероприятие çын чылай пуçтаранна, Николай Иванович Тинюковăн тăрăшулăхĕ куç умĕнче: хăй салтак формипе, тĕрлĕрен медаль кăкăр тулли, пăхса ытармалла мар. Вăл питĕ тĕреклĕ те патвар, хăюллă, ун çине пăхсассăнах паттăрлăх туйăмĕ вăранать. Шкулта ОБЖ предметне ертсе пыраканскер, ачасене мĕн пĕчĕкрен Тăван çĕр-шыва юратма, хисеплеме, чунтан савма вĕрентет. Хăйĕн ырă тĕслĕхĕпе çамрăксене пĕрремĕш утăмсем тума хавхалантарать. Николай Иванович тăрăшнипех шкулта Афганистан тата Чечен вăрçисене хутшăннă паттăр салтаксен кĕтесне йĕркеленĕ, кашни килен-каян унпа паллашать. Çавăн пекех шкул ачисем хĕсметре тăракан салтаксем патне çырусем çырасси йăлана кĕнĕ. Патриотла юрăсен конкурсне кашни класс хастар хутшăнчĕ. Çивĕч кĕрешӳре малти вырăна палăртма ансат пулмарĕ, жюри членĕсем пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене 10-11 классене, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсене 5-9 классене парас терĕç. Пиллĕкмĕшсем «Мамаев Курган», улттăмĕшсем «Россия»,«Бьют барабаны», çиччĕмĕшсем «Журавли», саккăрмĕшсем «Закаты алые», тăххăрмĕшсем «Катюша», вуннăмĕшсем «Алеша», вун пĕрмĕшсем «Кто если не мы» юрăсемпе куракансем умне тухрĕç. Чăн-чăн артистсем пек юрларĕç.

– Николай Иванович, сире çак çăмăл мар ĕçре мĕн хавхалантарать? Хăшĕсем вĕренекенсемпе ĕçлеме чун юратăвĕ кирлĕ, йывăр та теççĕ? Сирĕн шухăшпа еплерех?

– Çук йывăр мар. Эпĕ кунта чуна парса ĕçлетĕп, маншăн вăл савăнăç кăна. Чи малтан вăл тăван чĕлхене, халăха, йăла-йĕркене юратнинчен, хисепленинчен пуçланать. Çынна хисеплеме пĕлекен ачасемпе пĕр чĕлхе тупаятех. Аслă ăру йăлари хăйĕн ырă тĕслĕхĕпе çамрăксене пурнăçра яланах ертсе, кăтартса, вĕрентсе пымалла. Кирек мĕнле ĕçре те ачана хавхалану кирлĕ.

– Вĕсене епле хавхалантаратăр, мĕнле пĕр чĕлхе тупаятăр?

– Сăкăт шкулĕнче вĕренекенсем чăннипе те пултаруллă, кашни уява тĕплĕн хатĕрленеççĕ, çавăнпа вĕсемпе яланах ĕçлес килет. Вĕренекенсем ман пата «Николай Иванович, ку е вăл япалана мĕнле тусан лайăхрах-ши?» – тесе пырса ыйтсан пушшех те савăнтарать. Кун пек ачасене мĕнле пулăшмăн? Хальхи вĕренекенсене эпир мар, вĕсем пире ĕçлеме хавхалантарса пыраççĕ. Çамрăксем ырă ĕç пуçаруçи пулни хĕех савăнăç.

Уявсене хатĕрленнĕ çĕрте Николай Иванович Толстовăн та тӳпи пысăк. Вăл музыка урокĕнче ачасене кĕвĕ-çемме туйма, юрра чун-чĕре витĕр шăрантарса кăларма вĕрентет. Вĕсемпе пĕрле хăв та çамрăкланса пыратăн, çитĕнĕвĕсемпе мĕн пур кăмăлтан савăнатăн.

Шкул директорĕн çумĕ, Надежда Клементьевна Тинюкова:

– Вĕрентекенсемпе пĕр шухăшлă пулса çавăн пек йышăну турăмăр: кашни уйăхра черетпе пĕр класс концерт лартать, çакă ачасем хушшинче тимлĕхе те, пĕр-пĕрин хушшинчи ăмăрту хăватне те ӳстерет. Шкулта тĕрлĕ кружок секцийĕ ĕçлет: ирĕклĕ кĕрешӳ, кире-пукан спорчĕ, ташă-юрă, пукане театрĕ. Кăштахран Надежда Клементьевна çапла хушса хучĕ: "Пĕр ача та кружока çырăнмасăр юлман. Тĕрлĕ уяв каçне хатĕрленнĕ чух ачасем пĕтĕм чунне парса хатĕрленеççĕ, хăйсемех сценари çыраççĕ. Районта иртекен мĕн пур конкурса, олимпиадăна тăтăшах хутшăнаççĕ. Хамăр тăван шкул чысĕшĕн ырми-канми тăрăшатпăр. Çуллахи вăхăтра та ачасенчен уйрăлмастпăр – 2-шер сменăпа кану лагерĕ ĕçлет. Вĕсем унта пĕрле пахча çимĕç çитĕнтереççĕ, юсав ĕçĕсем ирттереççĕ, спорт ăйăйисене выляса киленеççĕ. Вĕренекенсене вожатăй пулма та явăçтаратпăр. Пĕр-пĕрипе туслă пулнине нимĕн те çитменнине ачасем аван чухлаççĕ".

## Кăмăла çĕклет



«Курăр-ха, сцена çинче каллех Карина Убасева ... Чăн та, унăн юрри-ташши куракансене тыткăнлать, савăнтарать, чуна уçать. Шăпчăк сасси унăн», – теççĕ тусĕсем. Чăваш юрри-кĕввине, ăйăйи-ташшине кăмăллать. Районта иртекен мĕн пур конкурса хутшăнаканскер, пĕрре те алă усса лармасть. Пушă вăхăтра хăйĕн тавра курăмне аталантарма тăрăшать, тĕрлĕ кĕнеке вуласа киленет, кил таврашĕнче ашшĕ-амăшне пулăшать.

– Карина, эсĕ камран вĕреннĕ çавăн пек хитре юрлама?

– Манăн аттепе анне те юрлаççĕ. Асанне вара вăйлă юрлакансенчен пĕри пуль. Вĕсемпе эпĕ мухтанатăп. Савăнăçлă туйăм вара çитĕнӳ тума, шкулта лайăх вĕренме тата ырă çын пулма хистет.

– Пĕрремĕш хут сцена çинче юрланине ас тăватăн-и?

– Паллах. Чи пĕрремĕш хут «Прекрасное далеко» вырăс юрри пулчĕ. Малтан питĕ вăтанаттăмччĕ халăх умне тухма, каярахпа хăнăхрăм. Халĕ хама ирĕклĕ туятăп.

– Карина, эсĕ яланах уявсене хутшăнатăн. Куракансем хăйсен кăмăллакан юррисене темиçе хутчен те шăрантарма ыйтмаççĕ-и?

– Ун пекки пулнă. Пĕррехинче «Хавас» ушкăнăн «Пилеш кайăксем» юрра темиçе хутчен те юрлама тиврĕ, халăх алă çупать, тепĕр хут юрлама ыйтать. Вĕсен кăмăлне хуçас темерĕм.

– Хальхи чăваш эстрада юрăçисенчен сана ытларах камăн пултарулăхĕ килĕшет?

– Алексей Московский, Петр Ермолаев, Алексей Шадриков тата Полина Борисова юррисене кăмăллатăп.

## Çитĕнӳсемшĕн – район пуçлăхĕн парни



Вуннăмĕш класра вĕренекен Евгений Анюров спортпа туслă. Унăн ашшĕ Владислав Владимирович мĕн ачаранпах хăйĕн ывăлне ирĕклĕ кĕрешӳ секцине явăçтарнă. Женьăн тăрăшулăхĕ сая кайман, пĕр ăмăртуран теприне çӳреме тытăннă. Республика тулашĕнчи ăмăртусенче темиçе хутчен те çĕнтерӳçĕ пулнă, хаклă парнесене тивĕçнĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн те ырми-канми тăрăшать, маллалах талпăнать, паллă спортмен пуласса шанать. Çитес вăхăтра качча Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командипе Оренбург хулине кайма хатĕрленет.

– Женя, эсĕ спортăн тата мĕнле тĕсĕсене юрататăн?

– Мана уйрăмах йĕлтĕрпе чупасси, волейбол, хоккей ăйăйисем килĕшеççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе пĕр евĕр мар. Кашнин уйрăмлăх. Хоккейра тата волейбол та ăнланса выляни кирлĕ, пĕччен çĕнтерме май çук.

– Мĕнле тĕллевпе пурăнатăн?

– Эпĕ – сывă пурнăç йĕркишĕн. Тăрăшмасăр нимĕн те пулмасть. Çавăнпа та малалах талпăнмалла.

**Патăрьел районĕ,**
**Сăкăт шкулĕ.**

## Юрра-ташша ăста




Вун пĕрмĕшĕнче вĕренекен Мария Бабаева чăваш, вырăс, акăлчан юррисене итлеме кăмăллать. «Кĕвĕ-çемĕ итленĕçемĕн манăн кăмăл туйăм та улшăнать, малашне çĕнĕ утăмсем тума вăй-хăват хушăнать», – тет хĕр. Учительсем пике шкулти пур мероприятие те хас-тар хутшăннине пĕлтерчĕç. «Хитре, илĕртӳллĕ ташăсем лартма, вĕсене сцена çинче халăх умне кăларма юрататăп», – тет вĕренекен. Мария çав тери ĕçчен, кил таврашĕнче ашшĕ-амăшне яланах пулăшать, пĕрре те ӳркенменскер, пĕтĕм çĕре ĕлкĕрме тăрăшать. Юрист профессине алла илесшĕн вăл. Районта çулленех «Чăваш пики» конкурс çӳллĕ шайра иртет. Шкул та хастар хутшăнать унта. Марина Хмелева, Ольга Лаврентьева, Татьяна Горбунова унччен те шкул ятне яман. Хальхинче те Мария шкул чысне çӳлте тытрĕ, хăйĕн пултарулăхĕпе куракансен кăмăлне кайрĕ. Жюри членĕсем те тивĕçлипех хакланă, Хисеп хучĕ тата хаклă парнепе хавхалантарнă.

# Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă

**Мĕн пиркиччĕ-ха çак тупмалли юмах? Э, çук, мăйăр çинчен сăмах пымасть кунта. Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкасси шкулне çапла танлаштару тупса панăшăн вĕрентекенĕсем кӳренмĕç пулĕ тетĕп. Çак пĕлӳ çурчĕ пысăк мар, пĕр хутлă кăна. Ăна 1976 çулта хăпартнă. Шкулта тăхăр класс çеç. Вуннăмĕшсемпе вун пĕрмĕшсем çывăхри Чурачăка çӳреççĕ. Çапах ачасен ăс-тăнне тарăнлатассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ кунта. Пайти те сисĕнет: маттур вĕренекенсем тăтăшах район тата республика шайĕнчи конкурссенче çĕнтереççĕ. Çак шкултан вĕренсе тухакансем пурнăçăн аслă çулĕ çине тăрса халăхăмăршăн ырă ĕç тăвасси иккĕленӳсĕр. Акă тĕслĕххен, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Петрович Леонтьев, «Çĕр улмие мухтав» агрофирмăн директорсен канашĕн председателĕ Александр Петрович Капитонов, Пукане театрĕн артисчĕ Иван Кузьмин, Ольга Лукова юрăç, Чăваш Ен наци радиовĕнче саламсен кăларăмне ертсе пыракан тата «Эмине» ушкăнра юрлакан Ирина Николаева... Вĕçĕмсĕрех каласа кайма пулать. Кĕçĕннисем те вĕсем пек маттур та пултаруллă пулма ĕмĕтленеççĕ, çавăнпах лайăх вĕренме тăрăшаççĕ. Анат Тимĕрчкассисем «Тантăша» питĕ юратаççĕ. «Урокра та усă куратпăр, – тет чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Наталья Витальевна Филиппова. – Хаçатра хускатнă çивĕч ыйту тавра класс сехечĕсенче калаçатпăр. Нумай вулакан ачан сочинени çырнă чухне йывăрлăх сиксе тухмĕ. Çавăнпа вĕсене яланах «Тантăшпа» туслаштарма тăрăшатăп».**

## *Виктория – çĕнтерӳ!*



Наталья Витальевна тăххăрмĕшĕнчи Виктория Ивановăна уйрăмах мухтать. «Питĕ маттур хĕр ача вăл. Кĕçĕн класранпах районти чăваш чĕлхи олимпиадинче малти вырăнсене йышăнать. Кăçал мультимедиллĕ презентацисен конкурсĕнче иккĕмĕш тухрĕ», – тет вун пилĕк çул ачасене тăван чĕлхе илемне туйма тата юратма вĕрентекенскер. Çак презентацие пурнăçлама Викăна пĕрре те йывăр килмен иккен. Наталья Витальевна ăнлантарнине хăвăрт ăса хывнăскер халĕ юлташĕсене те пулăшма пултарать.

Виктория ят латинла «victoria» сăмахран пулса кайнă. Вăл «çĕнтерӳ» тенине пĕлтерет. Ашшĕ хĕр ачана çапла ят хума сĕнсен амăшĕ хирĕçлемен. Тен, юратнă тĕпренчĕкне çак кăткăс пурнăçри пур йывăрлăха та çĕнтерме пулăшса пырĕ вăл? Еплерех хитре илтĕнет тата – Виктория. Пахчари çырла тейĕн.

Анлă тавра курăмлă хĕр ача биологи предметне те кăмăллать. Малашнехи çул-йĕрне тухтăр ĕçĕпе çыхăнтарасшăн вăл. Кăмăл çирĕплĕхĕ пуртан юнран хăрамасть. Эппин, ĕмĕтне пурнăçа кĕртес шанăç пысăк. «Пирĕн çемьере медицина ĕçченĕсем çук. Çавăнпа эпĕ çак çитменлĕхе тултарасшăн. Манăн ачасене сиплекен пулас килет», – тет çирĕп тĕллевлĕскер. Кăçал Викăн патшалăх экзаменне хатĕрленмелле, çавăнпа вăл пушă вăхăт тупăнсанах алла кĕнеке тытать е Интернетри экзамен ыйтăвĕсене хуравласа пĕлĕвне тĕрĕслет.

Спортпа туслă пулни сиен кӳмĕ, сывлăха тата кăмăл-туйăма çирĕплĕтет çеç. Çакна пĕлсе тăракан Виктория физкультурăра та маттуррисен йышĕнче. Чупма, йĕлтĕрпе çӳреме, баскетболла тата волейболла выляма ăста вăл. Нумаях пулмасть Вера Чернова Раççей чемпионки ячĕпе иртнĕ ăмăртăва та хутшăннă.

«Хула ачисем яла килсен вĕсене чăвашла калаçма вĕрентетпĕр, хăйсемех çавна ыйтаççĕ те...» – тет Вика. Ку тăрăхра тăван чĕлхене юратакансем, унăн вучахне сӳнме паман маттурсем пурăннишĕн чун савăнать.

## *Пысăк ятшăн мар вăл, çĕр-шыва усă кӳресшĕн*



Наталья Витальевна Филипповăн ывăлĕ Алексей те чăн-чăн чăваш чун-чĕриллĕ. Çакă унăн калаçăвĕнчен те, вĕренӳри ӳсĕмĕнчен те сисĕнет. Районти чăваш чĕлхи олимпиадинче çулсеренех çĕнтерӳçĕсен йышне лекет вăл. Ытти предметсемпе те маттур. Кăçал математикăпа тата тăван ен культурипе виççĕмĕш вырăна тухнă. Çакăн пек ăмăртусене хутшăнсан вĕренме тата кăсăклăрах пулнине палăртрĕ вăл. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ вăхăтрах олимпиадăсенче палăрнă. Вĕренӳре йывăртарах килекен ыйтусем тавра тăрăшуллă ача яланах амăшĕпе канашлать. Çывăх çынни ăна кирлĕ сĕнӳпе пулăшатех.

Филипповсен килĕнчи вулавăш питĕ пуян. Унта паллă çыравçăсен кĕнекисенчен пуçласа паян кăна вăй илсе пыраканнисем таранах пур. Лешăна вара ытларах Леонид Агаков çырнисем килĕшеççĕ. Унăн «Партизан Муратне» темиçе те вулама хатĕр.

Мĕнле чĕр чуна кăмăлланине кура çынна лайăххах пĕлме пулать. Алексейăн юратнă тăвата уралла тусĕ – йытă. Эппин, унăн усă чунлăхĕпе шанчăклăхĕ пирки иккĕленмелли те çук. «Бобикпа кĕтӳ кĕтме те лайăх. Ĕнесене тĕкĕнмест вăл, кăшт хăратать кăна», – тет арçын ача.

Лешăна яланах шанма пулать, ĕçе вăхăтра пурнăçлама хăнăхнă вăл. Çулла йĕтем çинче ĕçлет, лашапа тем те пĕр турттарать. Ашшĕпе иккĕшĕ кил тĕрĕшре пăта çапма ӳркенсе тăмаççĕ. «Манăн атте пекех ĕçчен пулас килет», – тет маттурскер. Выльăхчĕрлĕх картишĕнче те хăйне валли ĕç тупать. Ĕнепе пĕчĕк пăру уйрăмах кăмăллаççĕ арçын ачана, ăна курсанах савăнăçлăн муклатаççĕ.

Алексей мĕн ас тăвасса, аслашшĕ бригадирта вăй хурать. Пĕчĕк чухне хирсем тăрăх пĕрле çӳренĕ вăхăтра шăпăрлан бригадир пулма ĕмĕтленнĕ. Халĕ вара кăшт урăхларах калаçать. «Çĕр-шывра мĕнле професире çын çитмест, çав ĕçре вăй хурасчĕ, – тет мал ĕмĕтлĕ арçын ача пуласлăх пирки шухăшла putса. – Мана пысăк ят кирлĕ мар, çуралнă еншĕн усăллă пулас килет кăна».

## *«Президент пулас килет!»*



Юрă-кĕвĕ пирĕн кăмăлпа тачă çыхăннă. Пĕр тĕрли тунсăха вăйлатать, тепри савăнăç хушса парать. Ĕçлеме хавхалантараканнисем те пур. Çакна саккăрмĕшĕнчи Денис Зайцевпа калаçсан ăнлантăм. Юрă итлеме çав тери кăмăллать вăл, чăн-чăн меломан тейĕн. Шкулти мероприятисене те хастар хутшăнать: класпа юрлаççĕ те, ташлаççĕ те, концерт лартма ялан хатĕр. Анат Тимĕрчкасси шкулĕнче кашни уява уйрăм класс хатĕрленет, çавăнпа никам та айккинче юлмасть.

Денис вĕренӳре аван паллăсемпе ĕлкĕрет. Предмет олимпиадисене хастар хутшăнать. Географипе виççĕмĕш, технологипе иккĕмĕш тухнă. Физкультурăна та юратать. «Район ăмăртăвĕсенчех палăрман, анчах хамшăн спортсмен эпĕ», – тет вăл.

Лара-тăра пĕлменскер пĕр ĕçрен те хăраса тăмасть. Килте икĕ арçын ачаран кĕçĕнни пулнăран ашшĕ-амăшĕн пĕтĕм шанăçĕ – унра. Асли шкул пĕтерсе тухса кайнă та ĕнтĕ.

Çутă ĕмĕчĕпе паллаштарнă май: «Манăн президент пулас килет! – тет Денис çирĕппĕн. – Ĕлĕкхи ачасем урамра нумай вылянă. Халĕ вара компьютер умĕнче ларасçĕ е телевизор пăхаççĕ». Çак лару-тăрăва улăштарас тесе кашни ачана пĕчĕклех спортпа туслаштармаллине ăнланать вăл. Шухăш-ĕмĕтне пурнăçа кĕртме Дениса ăнăçу сунар!

## *Тăван тавралăхшăн хамăрăн тăрăшмалла*



Тăххăрмĕшĕнче экологи предмечĕ çук пулин те вăл биологипе тачă çыхăннине палăртмалла. Çавăнпа олимпиадăна хатĕрленме вăхăт çитсен унта хутшăнма Тамара Ивановна Кириллова вĕрентекен пĕр иккĕленмесĕрех Алена Галкинăна суйланă. Çак хĕр ача вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пырать, çут çанталăкпа кăсăкланать. Эппин, унра шанчăк пурах.

«Экологипе проект хатĕрленĕ чухне хамăр тăрăхри шыв-шурпа вăрмансене тĕпчерĕм, – каласа парать Алена. – Хурлантаракан тĕрĕслĕхе асăрхамасăр иртме çук. Вăрмансем çулсеренех сахалланса пыраççĕ. Шыв-шур та таса мар. Хăшĕ-пĕри кунта лавĕ-лавĕпех çӳп-çап пырса тăкнăран çаппа пуль. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çак киревсĕрлĕхе чарма тăрăшать, анчах вăл пурне те асăрхаса çитереймест-çке. Тăван тавралăхшăн хамăрăн тăрăшмалла».

Кашни çулах Алена ашшĕпе пĕрле плотина хĕрне йăмра лартать. Ку вăл çырансем ишĕлесрен самаях пысăк пулăшу кӳрет. Тавралăх илемĕ вара, паллах, кашни иртен-çӳрене илĕртет.

Çут çанталăка юратакан хĕр ача килĕнче нумай чечек ӳстерет. Вĕсемпе ĕçлеме те аван, кăмăл-туйăм тӳрех лайăххланать. Час-часах вулав тĕнчине путаканскер чăваш тата вырăс литературине пĕр пекех килĕштерет. Л.Агаковăн тарăн шухăшлă та тыткăна илекен хайлавĕ семпе Н.Гоголĕн «Тарас Бульба» повеçĕнче çыннăн лайăх тата начар енĕсем аван курăннине асăрханă вăл.

Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне канăç паман шухăшсене Алена кун кĕнекине çырса пынă. Кайран вара, кăшт ӳсерехпе, чунĕнчен сăвăсем шăрçаланса тухма тытăннă. Малтанхи хайлавĕнче касхи илем сăнланнă. Хĕр ачан чылай сăвă пухăннă ĕнтĕ, анчах кун кĕнекинчи шухăшсене тĕплĕ упранă пек, вăл хайлавĕсене никама та кăтартасшăн мар. Эппин, çут çанталăка хаклама тата сыхлама пĕлекен Алена чĕререн тухакан йĕркесене те çилпе вĕçтермест.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

ПУЛТАРУЛЛИСЕМ

# «Пирĕн тăрăхра физика саккунĕ хуçаланать»



Вуннăмĕш класра вĕренекен Аня Атласова пĕрремĕш класранпах отличниксен йышĕнче. Ăслă та тăрăшуллăскер Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине те тивĕçнĕ. Чылай предметпа районта тата республикăра çуллен иртекен олимпиадăсенче çĕнтерсе яланах мала тухать. Пĕлтĕр районта акăлчан чĕлхипе пĕрремĕш, кăçал иккĕмĕш, чăваш чĕлхипе иртнĕ çул та, кăçал та иккĕмĕш вырăнсене йышăннă. Психологи предмечĕн олимпиадинче вара "За лучшую психологическую идею" ĕçпе диплома тивĕçнĕ.

Уншăн физика урокĕ – чи юратни. Мĕншĕн тесен унта интереслĕ. Тĕпчевсем, сăнавсем иртеççĕ. Малашне те вăл çак техника ăслăлăхне тĕпчеме малалла вĕренме каясшăн. Питĕ кăсăклă-çке физика пулăмĕсене тарăнрах пĕлме.

– Пирĕн таврара пĕтĕмпех физика саккунĕ хуçаланать, – тет Аня. – Унсăр самолетсем тӳпере вĕçеймĕç, караппсем те тинĕсре ишеймĕç...

Тăрăшулăхне пула "Çулталăк вĕренекенĕ" ята та тивĕçнĕ вăл. Портфолио хатĕрленĕ, кайран хăйĕн пултарулăхне сцена çинче кăтартнă, юрланă, ташланă. Тӳресем ачасене пур енчен те тĕрĕсленĕ хыççăн чи маттуррине палăртнă. Хĕр упраç мĕн пур çитĕнĕвĕшĕн питĕ хĕпĕртет.

Вĕренӳре хастарскер спортпа та туслă, улттăмĕш класранпах баскетбол секцине çӳрет. Вĕсен команди ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнать. Кунсăр пуçне Аня тăршшĕне тата çӳллĕшне сикессипе шкулта рекорд кăтартнă. Пĕлтĕр районта иртнĕ ăмăртура çак спорт тĕсĕпе пĕрремĕш вырăн та çĕнсе илнĕ.

Хăйне пур енĕпе аталантарма тăрăшакан хĕр упраç юрă-ташăра та палăрать. Акă нумай пулмасть районти патриотла юрăсен конкурсĕнче "Я хочу, чтобы не было больше войны" юрăпа пĕрремĕш пулнă. Шкулти "Восходящая звезда" хор ансамблĕнче те хаваспах çӳренĕ пике. Республикăри фестивальсенчен яланах дипломсемпе таврăннă.

– Шел те, халĕ эпир ансамбле çӳрейместпĕр, унта юрлакан хĕрсем шкултан вĕренсе тухрĕç, – тет Аня тунсăхлăн.

А. Г. Николаев ячĕллĕ шкулта пурнăç çăннипех те питĕ интереслĕ иккен. Кунта çамрăк космонавтсен юхăмĕ пур. Унта хутшăнакансене республика, район, шкул ĕçĕнчи çитĕнӳсене кура тĕрлĕ енлĕн хаклаççĕ.

– Манăн "Çăлтăр" категори пур. Ку чи лайăххи. Ăна илме питĕ нумай тăрăшмалла, пур çĕрте те палăрмалла. Эпĕ наукăпа практика конференцийĕсенче мала тухса çак ята тивĕçрĕм, – тет Аня савăнăçне пытараймасăр.

– Эпир, çамрăк космонавтсем, тĕрлĕ слет ирттеретпĕр, сумлă хăнасемпе космонавтсене кĕтсе илетпĕр, вĕсемпе тĕл пулусем йĕркелетпĕр. Пĕрре те ахаль лармастпăр. Пурне те пирĕн ялти Музея тата шкула пырса курма чĕнетĕп.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Шуршăл шкулĕ.

---

•ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ



## Хаваспах çӳретĕп

Эпĕ шкулта аван вĕренетĕп. Пур предмета та юрататăп. Хитре ӳкерме, ĕç урокĕсенче тĕрлĕрен япала ăсталама кăмăллатăп. Уроксем хыççăн эрнере икĕ хутчен Çĕрпӳри ача-пăча ӳнер шкулне çӳретĕп. Унта ӳкерме, сăрлама, тĕрлĕ материалтан кĕлетке-кӳлепе ăсталама хăнăхтараççĕ. Пире ырă та уçă кăмăллă Любовь Анатольевна чунтан ăнлантарать. Нумаях пулмасть чустаран тĕрлĕ чĕр чун кĕлеткисене тума вĕрентрĕ. Тăрăшса ăс панишĕн пурне те тав тăватăп.

*Полина ИВАНОВА.*

## Тăрăшса вĕренмелле

Эпĕ вĕренме питĕ кăмăллатăп, иккĕмĕш чĕрĕке те «5» паллăпа çеç вĕçлерĕм. Шкула хаваспах çӳретĕп, кашни кун çĕннине пĕлме тăрăшатăп. Килти ĕçсене те яланах вăхăтра пурнăçлатăп. Районта вырăс чĕлхипе иртнĕ олимпиадăна хутшăнса виççĕмĕш вырăн çĕнсе илме пултартăм. Питĕ савăнтăм. Тунă çитĕнӳсемпе кăна лăпланмастăп, шав малалла ăнтăлатăп.

*Мария ЯКОВЛЕВА.*

## Сывлăх – чи хакли

Сочире тин çеç вĕçленнĕ Хĕллехи Олимпиадăна халалласа класра «Пултарулла ачасем – сывлăхлă çемьере» уçă урок иртрĕ. Эпир урокра Олимп вăййисем хăçан аталанса кайнине, мĕнле çĕр-шывра иртнине, хастар та паттăр спортсменсем çинчен чылай пĕлтĕмĕр. Эпĕ те физкультура урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Спортсменсем пекех пулма тăрăшатăп. Халĕ тăтăшах йĕлтĕрпе чупатпăр, ăмăртатпăр, çунашкапа тăвайккинчен ярăнатпăр. Ачасем, эсир те спортпа туслă пулăр!

*Таня ЯКОВЛЕВА.*

## Ӳссен эпĕ кам пулатăп?

Уроксем хыççăн эпир пулас професси çинчен калаçрăмăр. Мĕн тĕрлĕ кăна професси çук пулĕ! Пирĕн вара хамăр юратнă ĕçе пĕчĕкренех суйласа илме пĕлмелле. Эпĕ тухтăр пулма ĕмĕтленетĕп. Тухтăрсем çынсене сиплеççĕ, сыватаççĕ. Питĕ пархатарлă та кашни хисеплекен ĕç. Тухтăр пулас тесен нумай вуламалла, пĕлмелле, чылай тăрăшмалла. Эпĕ те вĕсем пек пуласшăн, çавăнпа та шкулта «5» паллăпа çеç вĕренетĕп.

*Виктория КРЫЛОВА.*

## Пирĕн çемье

Пирĕн çемье пысăк: анне, эпĕ, Аня йăмăк, кукамай Раиса. Манăн анне – сутуçă. Вăл Çĕрпӳ лавккинче вăй хурать. Яланах тутлă канфет, шăккалат, печени, торт илсе çитерет. Кашни уявра пылак кучченеçпе хавхалантарать. Çав тери савăнатпăр, аннепе мухтанатпăр.

Кукамай пирĕншĕн тăрăшать, килти уроксене тума пулăшать, тутлă апат пĕçерсе çитерет, лайăх вĕреннĕшĕн хĕпĕртет.

Эпир çемьере туслă, пĕр-пĕрне пулăшса, ырă канашсем парса пурăнатпăр.

*Татьяна ЯКОВЛЕВА.*

Çĕрпӳ районĕ,
Тавăшкасси шкулĕ.

---

# Мăн асаттепе мухтанатăп



Çитес çулхи майăн 9-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитет. Çавна май пире класс ертӳçи Антонина Александровна Лазарева вăрçă паттăрĕсем çинчен хаçат каларасси пирки пĕлтерчĕ. Эпĕ вара çийĕнчех ялти музея çул тытрăм. Унта манăн асатте ĕçлет. Вăл вăрçа хутшăннă хамăр ял çыннисем пирки чылай каласа кăтартрĕ. Мана уйрăмах хамăн мăн асатте кун-çулĕ çав тери интереслентерчĕ.

Манăн мăн асатте Василий Никитич Петров ятлă. Вăл 1924 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче çуралнă. Ялта вăтам шкултан вĕренсе тухнă. 1942 çулхи августăн 23-мĕшĕнче вун саккăрти çамрăка фронта илнĕ.

Чи малтанах мăн асатте Сергач хулине мотоциклистсен 14-мĕш вĕрентӳ полкне лекнĕ. 1943 çулхи март уйăхĕнче Мускав çывăхĕнчи Лось станцийĕ патĕнче 1-мĕш гварди мотоциклистчĕсен полкĕнче пулнă. Вăл разведкăсене çӳренĕ. Унтан вĕсем эшелонпа Воронеж облаçне çитнĕ. Курск патĕнчи хĕрӳ çапăçусене хутшăннă.

1943 çулхи август уйăхĕсенче Белгород, Харьков, Полтава хулисене хаяр тăшманран ирĕке кăларнă. Ун хыççăн Днепр юхан шывĕ урлă каçса Знаменка, Кировоград, Звенигород, Днепропетровск, Умань хулисемшĕн пынă çапăçусенче пулнă.

Румыние те ирĕке кăларма хутшăннă. 2-мĕш Белорусси фронтĕнче Березина юхан шывĕ урлă каçса Борисов, Минск хулисене ирĕке кăларнă çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн медале тивĕçнĕ.

1945 çулхине Балти тăрăхĕнчи Шауляй, Кенигсберг тата ытти хулашăн пынă çапăçусене хутшăнса паттăрлăх кăтартнăшăн тепĕр хут медальпе чысланă.

Çĕнтерӳ кунне Василий Никитич Германи çĕрĕ çинче кĕтсе илнĕ. Яла таврăнсан нумай çул тăван колхозра тăрăшса ĕçленĕ. Анчах та халĕ вăл пирĕнпе пĕрле çук ĕнтĕ.

Эпĕ хамăн мăн асаттепе мухтанатăп. Манăн та ӳссе çитсен çар офицерĕ пулас кăмăл çуралчĕ.

*Саша ПЕТРОВ, 2 класс.*

Тăвай районĕ,
Енĕш Нăрваш.

# Чăвашла маннă чăваш – çухалнă пуртă аври



## Чăваш чĕлхин сумне çĕклесчĕ

*«Тантăш» хаçатра (2014 çулхи нарăсăн 6-мĕшĕнче, 5 №) «Пушкăртра «Шупашкар калаçмасть», телекурав та савăнтармасть» статьяпа паллашрăм. ЧР Етĕрне районĕнчи Пушкăрт шкулĕн ĕçченĕсен ăшĕнчен тухнă чун ыратăвĕ мана та, 30 çул чăваш ачисене хутла вĕрентнĕскерне, пăлхантарчĕ. Чăваш чĕлхи шăпи пирки питех те кирлĕ калаçу хускатнине ырлатпăр тата вĕрентекенсен шухăшĕпе килĕшсе хамăр пăшăрханнине те палăртатпăр. «Пĕр çын сурсан типсе ларать, пин çын сурсан кӳлĕ пулать», – тенĕ ваттисем. Çак каларăш пире паянхи кун 3-4 çын пухăнса чăваш чĕлхи пирки халаплани çителĕксĕр тет, пĕтĕм халăхпа калаçма хистет.*

Чăнах та, ăшра капланса килнĕ шухăшсене хаçат, чăваш наци радио тата телекурав урлă, çӳлти шайра иртекен тĕрлĕ канашлупа пухура пуçлăхсемпе тӳре-шара илтмелле калаçма вăхăт çитрĕ. Пирĕн вĕсене чан çапсах чăваш чĕлхин йывăр лару-тăрăвне лайăхлатма хистемелле.

### «Ырă кун пултăр!» тенине мĕн çиттĕр?

Пурнăç йĕрки тĕпрен улшăннă вăхăтра чăваш интеллигенцине ача-пăча тăван чĕлхерен ютшăнма пуçлани пăшăрхантарать. Чăваш халăх культури йăшни те вĕсен чунне витерет. Вĕрентекенсен кулянăвĕ чăвашлăхшăн кар тăма ыйтать. Апла пулсан тăван чĕлхепе культурин сумне çĕклес, ырă йăла- йĕркене çĕнĕлле аталантарас тесен тата мĕн-мĕн тумалла-ши?

Пирĕн республикăра чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи шутланать (вырăс чĕлхипе танах). Тăван чĕлхе патшалăх чĕлхи пулнине чăвашла çырнă шкул ячĕсенче тата «Ырă сунса кĕтетпĕр!» тенинче кăна куратпăр. Чылай çĕрте вĕренӳ çуртне шала кĕрсен вара урăх тĕнче асăрхатпăр. Шкул пурнăçĕпе ачасен вĕренӳ ĕç-хĕлне кăтартакан стендсем, плакатсем тата кабинетсен ячĕсем вырăсла пулни пире, паллах, хурлантарать. Чăваш чĕлхи учителĕн вĕсене май килнĕ таран чăвашлатма тăрăшмалла. Анчах та тăван сăмаха пурнăç йĕркине кĕртессине педагог çине тиени те йăнăш тесе шутлатпăр. Шкулта чăваш чĕлхине епле хаклани директортан чылай килет. Пуçлăх чăваш чунлăскер пулчĕ пулсан кунта вăл тăван чĕлхене хисеплĕ вырăнтах тытать. Ачасем аслисемпе тĕл пулсан «Здравствуйте» вырăнне «Ырă кун пултăр!», сыв пуллашнă чухне «Тепре куриччен!» тесе калани, линейкăсемпе уявсене чăвашла ирттерни, стендсем чăвашла пулни чăваш чĕлхине ытти предмет шайне тăратни, вĕрентекене хисепլениех ĕнтĕ. Çакнашкал ырă пулăм чĕлхе витĕмне ӳстерме тата çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани пама пулăшать. Чăваш чĕлхине ачаран хаклама хаçат-журнал вулакан вĕренет, вăл çитĕнсен чăваш кĕнекине алла илет. Çак пархатарлă пулăма аталантаракан вăй – шкул библиотекинче «Тантăш», «Хыпар» хаçатсем тата «Тетте», «Самант» журналсем пурри. Енчен те вĕсене класпа çырăнса урокра усă курсан ачасен чăваш чĕлхине хисеплесси пирки эпир пĕрре те иккĕленместпĕр.

Районти вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ шкул директорĕсемпе канашлусенче чăвашла вĕрентес ыйтăва тăтăш хускатсан, учительсене тĕрлĕ енлĕ пулăшу парсан йывăр лав тапранĕ.

Кашни шкултах фольклор ансамблĕ тата шкул театрĕ ĕçлемелле. Вĕсем ачасенче чĕлхе туйăмĕпе илемлĕхе вăйлатма, тăван халăхăн ăс-тăнĕнчи ырă енĕсене çĕнĕрен çĕклеме пулăшаççĕ. Хăй вăхăтĕнче çак пархатарлă ĕçе Шупашкарти Г.С.Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейăн ача-пăча «Пилеш» ансамблĕ, «Çăл куç» ташă ушкăнĕ тата театр туса пыратчĕç. Ачасем вĕсенче чăваш халăх культурин пуянлăхне хисеплеме хăнăхатчĕç. Юрăпа ташă ăсталăхне алла илетчĕç.

Лицейра пĕлӳ илнисем учитель е врач, инженер е экономист пулсан та чăваш чунлех юлчĕç, тăван чĕлхене хисеплеме манмарĕç.

### Лицей ачисем чăваш чунлах юлчĕç

Шкул вĕренӳ тытăмне «Тăван ен культури» урокĕсем кĕртнĕренпе 20 çул та иртрĕ. Анчах çак предметăн ырă та усăллă енĕсемпе вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче халĕ те туллин усă курмастпăр-ха. «Тăван ен культури» кĕнекисем малтан вырăсла, кайран чăвашла тухса тахçанах шкулсене çитнĕ ĕнтĕ. Чылай шкулта çак урок валли уйрăм сехетсем тупаймаççĕ е ăна ытти предметпа пĕрлештерсе вĕрентеççĕ. Ăна 5-9 классенче эрнере 1 сехет те пулин вĕрентмеллех. Класран класа куçнă чухне шкул шайĕнче «Тăван ен культури» предметпа куçăм экзаменĕ тытма е тата реферат çырма та ачасене сĕнме юрать.

Ачасем вырăсланнинче ыттисем айăплă мар. Айăпĕ хамăра хамăр хисеплеменнинче. Тĕслĕхрен, хула ачисем çуллахи каникула канма яла килсен хăш-пĕр кукамăшĕпе асламăшĕ мăнукĕсемпе çине тăрсах вырăсла калаçма хăтланаççĕ. Ку та тăван чĕлхене хисеплеменни патне илсе пырать. Капла тунинче ача атте-анне пилленĕ чĕлхе кирлĕлĕхне туйми пулать.

Чăваш чĕлхине упраса хăварас ĕçе ача пахчинченех патшалăхăн çирĕп йĕркепе туса пымалла. Ăна вăя кĕртме ятарлă программа йышăнни кирлĕ. Ачасене мĕн пĕчĕкрен чăвашла, тăван чĕлхепе ăс памалла. ЧР район центрĕсемпе поселок шкулĕсенче вĕренекенсем тăван чĕлхерен писесрен, чăвашлăх туйăмне çухатасран наци шкулĕн программипе вĕрентмелле. Вăл ĕçе районти шкул пайĕ йĕркелесе, тĕрĕслесе тăмалла.

Пирĕн республикăра чăвашлăха тытса-йĕркелесе пыракан тĕп шкул, наци шкулĕ кирлех. Вăл шкулта ăс пухакансене пĕр-пĕр тухăç халăхĕн чĕлхине тĕплĕн, тăван чĕлхене тарăн вĕрентесси, хаçат-журнал, куçару ĕçне, ташăпа театр ăсталăхне хăнăхтарасси тата чăваш халăхĕн историпе культурине алла илме пулăшасси тĕп вырăнта пулмалла. Хальлĕхе чăваш наци шкулĕ йĕркеленсе каяйманни чылайăшне кулянтарать, пăшăрхантарать.

### Ал айĕнче компьютер пулмаллах

Интернет тата информацин ытти хатĕрĕ аталаннă тапхăрта чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн ал айĕнче компьютер пулмаллах, анчах вăл пуррипе халь пурте савăнаймаççĕ-ха.

ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасен ĕçне-хĕлне паллăсем (отметкăсем) лартса хаклассине пăрахăçлама сĕнет. Енчен те эпир ку сĕнӳпе килĕшсе паллă лартассинчен хăтăлтăмăр пулсан чăвашла вĕрентнин кирлĕлĕхĕ çуккине палăртать мар-ши? Капла çулпа кайсан ачасем чăвашла пачах вĕренме пăрахас тейĕç. Эпир чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасен тăрăшулăхне паллăсем лартсах хаклас тетпĕр, паллă лартас мар текен шухăшпа килĕшменнине пĕлтеретпĕр.

Чăваш чĕлхи шăпипе çыхăннă тата тепĕр пулăма палăртса хăварар. ЧР халăх академикĕсем шкул пурнăçне, хаçат-журналпа кĕнеке ĕçне çирĕп кĕрсе вырнаçнă чăваш чĕлхин орфографипе пунктуацийĕн çĕнĕ правилисене пăрахăçласа кивĕ правилăсем патне таврăнас тесе ăшталанаççĕ. Çĕннисене йышăннăранпа 20 çул ытла иртрĕ вĕт. Çĕнĕлле çырма вĕреннĕ ачасен ачисем шкулта вĕренме тытăнчĕç. Кивви патне таврăнас текенсем чăваш чĕлхин пуласлăхĕ паянхи шкул ачисен çырăвĕ мĕнле шайра пулнинчен килнине манаççĕ. Çĕнетнĕ правилăсем шкул ачисемшĕн кулленхи правилăсем тата кашни урокра усă куракан кăтарту хатĕрĕ пулса тăчĕç. Пире, чăваш чĕлхи вĕрентекенсене, хальхипе ачасене вĕрентме меллĕрех. Пирĕн шутпа, кивĕ орфографи правилисем патне таврăнни – сиенлĕ. Вĕсем паянхи куншăн кивелчĕç ĕнтĕ. Ку таранччен сăмахсене кивĕлле çырма хăнăхнисенчен хăшĕ-пĕрне çĕнĕ правилăсене аса илме сĕнетпĕр.

Паянхи кун чăваш чĕлхипе литератури вĕрентес ĕçри тĕп тĕллевсенчен пĕри вăл – ачасене тĕрĕс те илемлĕ калаçма тата çырма хăнăхтарасси. Вĕсем кирек мĕнле лару-тăрура та тăван чĕлхепе таса калаçчăр.

Нимĕн тума та çук, глобализаци тапхăрне кĕрсе пыратпăр. Шкулсенче чăваш чĕлхи вĕрентесси кăткăсланса пырать. Ял халăх калаçăвĕ-пуплевĕ те чухăнрах илтĕне пуçларĕ. Кулленхи хутшăнура чăвашсенчен чылайăшĕ вырăсла пуплени, Вырăсла радиокăларăмсемпе телекуравсене итлени-пăхни, чăвашла-вырăсла е вырăсла-чăвашла калаçасси патне илсе çитерчĕ. Чăвашла та мар, вырăсла та мар хутăштарса калаçни таçта та янăрать. Паянхи кун тăван чĕлхе кирлĕлĕхне, çепĕçлĕхне çухатса пырать. Çак пулăма чарма чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн вăй-халĕ çитеймест. Çакнашкал лару-тăрура тăван сăмах, чăваш чĕлхи пĕлтерĕшĕпе хăватне çĕклесси вăл патшалăх политики пулса тăмалла. Пирĕн республикăри пуçлăхсемпе ертӳçĕсен чĕлхен нумай енлĕхне сыхласа хăварассине хăйĕсен аллине илмеллех.

***Геронтий Лукиянович НИКИФОРОВ,***
***ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.***

## Шкулта вун тăхăр çул ĕçленĕ май...

***«Ырă пуçару» страницăна тимлĕ вуласа тишкерсе тухрăм. Çакăн пек паха ĕçе тытăнни мана та килĕшрĕ. Пĕри, тепри чĕлхен аталанăвне çирĕплетессипе вăй хурсан усси пулатех, упраса хăваратпăрах эпир хамăрăн чĕлхене!***

Чĕлхе – хутшăну хатĕрĕ. Кирек мĕнле халăх та ăна пысăк пуянлăх вырăнне хурса хаклать. Манăн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи – сумлă та тĕреклĕ, вăл йăхсене пĕрлештерет, пирĕн несĕлсене çирĕплетет, çĕр-шыва малалла аталанма çул уçать.

Эпир пурăнакан тăрăх вырăсланса кайнă тесе калама çук-ха хальлĕхе. Анчах хăш-пĕр чух çак пулăма асăрхама пуçларăм. Ку, паллах, чунра пысăк йывăрлăх çуратать. Тăван чĕлхене епле урăх чĕлхепе танлаштарăн-ха, ăна манса урăх чĕлхене мĕнле йышăнăн?

19 çул ĕнтĕ эпĕ чăваш чĕлхипе литература урокĕсене ертсе пыратăп. Çĕнĕрен те çĕнĕ ăрупа ĕçлеме тӳр килет. Пилĕк-ултă çул каяллахипе танлаштарсан ачасем чĕлхе çине çăмăлттайрах пăхаççĕ, кĕнеке, хаçат-журнал вуласси те чакса пырать. Çемьери йăлайĕркесем те хавша пуçларĕç. Хамăрăн аталану çул-йĕрĕпе те кăсăкланма пăрăха пуçларăмăр, çывăх çынсене те ăру-тăванлăх сăмахĕсемпе хисеплесе чĕнме пĕлсех каймастпăр. Тата çакна палăртса хăварас килет. Ачана çуралсанах чĕвĕлти чĕкеç чĕлхи пиллеççĕ, чи пирвайхи сăмахĕ те унăн – анне. Анчах çак сăваплă сăмах çемьесенче çухала пуçларĕ. Классенче пĕрикĕ ача çеç хăйĕн çывăх çыннине анне тесе хисеплет, ыттисемшĕн вăл «мама» е «маму». Пурнăç хура-шурне курнă кирек мĕнле вата та çак сăмаха сивлет паллах. Çавăнпа çине тăрсах ăру-тăванлăх сăмахĕсене вĕрентетĕп, вĕсене кама мĕнле чĕнмеллине хăнăхтаратăп. Майĕпен йывăрлăха çĕнтерсе пыратпăр, çĕнĕ утăмсем тăватпăр, пĕр-пĕрне сывлăх суннă чух та «ырă кун пултăр» тетпĕр.

Кашни урокра тенĕ пекех вăтам ушкăнра вулава аталантаратпăр, пилĕк минут çурма сасăпа вулатпăр. Ку та йăлана кĕнĕ тĕслĕх пулса тăчĕ. Тата мана пулăшаканĕ – Г.Н.Волковăн «Кил илемĕ» кĕнеки. Вăл кашни кунах манăн сĕтел çинче. Академик вĕрентсе каланисем, калавсем, юмахсем ачасен кăмăлне каяççĕ, пурнăçа танлаштарма тата хаклама хăнăхса пыраççĕ.

Класс ертӳçи пулнă май, чылай ĕçе чăвашла ирттерме тăрăшатăп, унта ачасене те майĕпен явăçтарса пыратăп. Ку та тăван чĕлхене хакламалли паха пулăм пулса тăчĕ.

Кирек мĕнле вĕренекен те кĕнекесĕр, илемлĕ литературăсăр аталанаймасть. Ку ĕçре хаçат-журнал та пысăк пулăшу парать. Çавна май ачасене харпăр хăй тĕллĕн ĕçлемелли пултарулăх ĕçĕсем парса яратăп. Ку шырав ĕçĕсем вара ирĕксĕрех вулавăша утма хистеççĕ, тĕпчеве пуçăнма хушаççĕ. Çакă – ырă пулăм.

***Надежда ЕВДОКИМОВА.***

Йĕпреç районĕ,
Чăваш Тимеш.



**Анжела ЗАХАРОВА, 9-мĕш класс вĕренекенĕ:**

– Хам чăваш пулнишĕн савăнатăп, мăнаçланатăп. Чăваш чĕлхи – анне чĕлхи. Маншăн çывăхран та çывăх, кашни кун çиекен çăкăр пек, ĕçекен шыв пек. Мана чăвашăн çепĕç те хитре сăмахĕсем, сăвви-юрри, çи-пуçĕ питĕ илĕртет. Чăваш чĕлхи предмечĕн пĕлтерĕшĕ те питĕ пысăк. 9-мĕш класс хыççăн тăван чĕлхепе пĕрлехи патшалăх аттестацийĕ пулать тесен чун-чĕререн савăнтăм. Мĕнрен кая вара ман чĕлхе?! Ятарласа вырăс чĕлхипе тата математикăпа экзамен тытатпăр пулсан – халь ман чĕлхе валли те çул уçă. Ку маншăн – пысăк телей, хăйне евĕр тĕрĕслев.



**Настя СЮДАМОВА, 6-мĕш класс вĕренекенĕ:**

– Эпĕ ку тăрăхра çуралман, Симферополь облаçĕнчен аннен тăван çĕрне куçса килтĕмĕр çемьепе. Тăваттăмĕш çул тăрăшса вĕренетĕп чăваш чĕлхине. Малтанлăха, паллах, йывăрччĕ: вулама, çырма, юлташсемпе хутшăнма. Çине тăрсах вĕренетĕп, ыттисенчен камăн кая юлас килтĕр-ха. Халь эпĕ ытти чăваш ачисенчен пĕрре те кая мар: йăнăшсăр çыратăп тесен те тĕрĕс пулать, вулав нормине те тултаратăп, пултарулăх ĕçĕсене те хутшăнатăп. Питĕ килĕшет мана анне, кукаçи-куками чĕлхи. Çемьере вара, шел те, вырăсла калаçатпăр. Вăхăт иртнĕçемĕн эпир те чăваш чĕлхине тĕпе хурăпăр. Ман çакна шанас килет.



**Маша ПАВЛОВА, 10-мĕш класс вĕренекенĕ, ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ:**

– Хамăрăн кулленхи калаçура эпир тăван чĕлхепе ирĕклĕн усă куратпăр. Ку пирĕншĕн таса тивĕç пулмалла. Иртен пуçласа шкултан киле кайичченех пĕр-пĕринпе тĕрлĕ ыйту сӳтсе яватпăр, шӳтлетпĕр, хăш чух тавлашса та илетпĕр. Анчах юлашки вăхăтра пирĕн калаçăва вырăс сăмахĕсем кĕре пуçларĕç. Ку вара мана пăшăрхантарать. Çакă тĕлĕнмелле сапăр чĕлхене варалани, чĕлхен аталану çул-йĕрне чăрмантарни пулмасть-и?

Çемьере вара эпир çак йывăрлăха туймастпăр та. Асатте-асанне чĕлхипе шăкăл-шăкăл калаçатпăр, хаçат-журнал вулатпăр, наци радиовне итлетпĕр, хамăр чăваш пулнишĕн чун-чĕререн савăнатпăр.

## Ăна упрасчĕ

Мĕн пулса иртет пирĕнпе? Чăвашсем тăван чĕлхепе пуплеме вăтанаççĕ тейĕн, пур çĕрте те вырăсла калаçма тăрăшаççĕ. Мĕншĕн апла-ши? Уйрăмах хула çывăхĕнчи ялсенче çавнашкал лару-тăру. Чĕлхе пĕтсен халăх та пĕтет вĕт-ха. Çакна ăнланатпăр-ши эпир?

Республикăри тĕрлĕ шкулта пулнăран ачасем кĕçĕн класранах вырăсла калаçнине асăрхарăм. Çавна май, хам вĕреннĕ шкулти чăваш чĕлхипе литератури учителĕнчен тăван чĕлхен малашлăхĕ пирки ыйтса пĕлес терĕм.

– Пирĕн шкулта хĕрĕх çичĕ вĕренекен, пурте чăвашла калаçаççĕ. Хăйсем хушшинче те, урамра та, урокра та – кирек ăçта та. Яланах çапла пулнă. Чăваш чĕлхипе литература предмечĕсене юратакансем те пур. – Вуннăмĕш класра ăс пухакан Римма Мироновăна епле ырламăн? Темиçе хутчен ĕнтĕ Хусанта иртекен республика олимпиадине хутшăнса малти вырăнсем çĕнсе илет.

Интереслĕ произведенисене те пĕр-пĕринпе ăмăртмалла вуласа тухаççĕ ачасем урокра.

Чăваш чĕлхин малашлăхĕ пирки иккĕленес килмест-ха манăн, анчах та шкул çулне çитменнисен хушшинче вырăссем те пур. Çавăнпах ача садĕнче воспитательсен вĕсемпе вырăсла калаçма тивет. Тен, пурăна киле вĕсем те чăвашла пуплĕç, – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Ирина Дмитриевна Николаева. – Вăхăта сая ямасăр çине тăрса ĕçлемелле çеç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Тутарстан,
Чистай районĕ,
Анат Кăтрата шкулĕ.

## Асанне пулăшнипе ту çине хăпартăмах!



Пĕлтĕр çут тĕнчепе ĕмĕрлĕхех сыв пуллашнă асламăшĕшĕн çав тери тунсăхлать Наташа.

– Вăл тăрăшнипе чăваш чĕлхине юратма вĕрентĕм. Юратнă çыннăм çине тăман тăк, тен, чăваш кĕнекисене те кăмăлтан вуламан пулăттăм, – тет Канаш районĕнчи Карăклă шкулĕн вун пĕрмĕш класĕнче вĕренекен Наташа Федорова.

Пикен амăшĕ Çĕнĕ Шупашкарта çитĕннĕ. Яла качча пырсан та вырăслах калаçнă. Тĕпренчĕкĕсемпе те. Çавна май шкул сукмакне такăрлатакан Наташа чăваш предмечĕсемпе «уксахланă».

– Шăп çавăн чухне асанне ăнланса пулăшу пама тытăнчĕ. Каçсерен чăвашла кĕнекесем вулама тытăнтăмăр. Ай, малтанлăха мĕн тери йывăрччĕ! Хăш-пĕр сăмаха вулама мар, ăнланмастăм та. Вăл вара пĕр-пĕр тĕслĕх илсе çирĕплетсе, кăтартса паратчĕ. Содержание вара макăра-макăра каласа параттăм. «Асанне, урăх ан асаплантар! Пулмасть манран чăваш чĕлхине вĕренесси!» – тесе юнтарса та пăхаттăм куççулĕме шăла-шăла. Ытамне илсе çурăмран лăпкатчĕ: «Ачам, вĕрентсен упа та ташлать. Эсĕ те, акă, кĕçех чăвашла шăкăртаттарса калаçма кăна мар, çырма та тытăнăн», – тетчĕ лăплантарса. Тепĕр чух хăй апат пĕçеретчĕ, мана та ахаль лартмастчĕ, алла самантрах кĕнеке тыттаратчĕ. Унăн аллинчен вĕçерĕнеймерĕм. Йăпатса, хавхалантарса çӳллĕ ту çине хăпартрех вăл мана. Çавăншăн ăна тем пысăкăш тав сăмахĕ калатăп, – тет паян чăвашла вулама кăмăллакан пике.

Юратса та хавхаланса тишкерет вăл Александр Артемьев çырнă «Салампи» повеçне. Унти тĕп сăнарпа пĕрле савăнать те, пăшăрханать те.

– Хайлаври хитре те сăнарлă предложенисене пĕрре кăна мар, темиçе хут вулатăп та тетраде çыратăп. Сочинени шăрçалакă чухне вĕсемпе питĕ меллĕ-çке усă курма. Кун пек тума пире чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Галина Витальевна Дунаева ăс парать. Тĕрĕссипе вара унăн урокĕсем питĕ килĕшеççĕ мана. Эпĕ çеç мар, ытти шкул ачи те хисеплет, юратать Галина Витальевнăна. Уроксене кăсăклă ирттернисĕр пуçне çирĕп ыйтать. Çитменнине тата çамрăксемшĕн вăл анне пекех. Хăй ачине чăн-чăн çын пултăр текен амăшĕн çапла пулмалла та: мĕн кирлине çирĕп ыйтмалла, пурнăç кустăрмине çăмăллăн çеç кустарма ирĕк памалла мар. Ара, асанне те манпа хăй вăхăтĕнче çапла турĕ вĕт, – тет Наташа шухăша путса.

***Элиза ВАЛАНС.***

Канаш районĕ,
Карăклă.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Ентеше хисеплесе



*Кăçал юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Чăваш халăх çыравçи Василий Алентей çуралнăранпа 95 çул çитет. Кашни çулах Вăрмар районĕнчи Кĕтеснерте, Василий Степанович çуралса ӳснĕ ялта, шкул ачисен хушшинче литература конкурсĕ иртет. Ачасем унта йышлăн хутшăнаççĕ. Хăш-пĕр сăввипе «Тантăш» вулаканĕсем те хаваспах паллашасса шанатпăр.*

## Туссем

Пирĕн килте кушак пур,
Хай вара вăл пит маттур.
Унăн тусĕ шăши пур,
Вăл та самаях сатур.



Кашни кунах тĕл пулсан,
Эх, выляççĕ те ялан
Футболла та тытмалла,
Шашкăлла, пытанмалла.

***Даша ПАВЛОВА,***
***2 класс.***

## Хĕл кунĕсем

Шурă юр çăва-çăва
Витсе хучĕ таврана.
Çил-тăман шăла-шăла
Сикрĕ тарăн çырмана.



Хĕллехи кĕске кунсем
Килсе çитрĕç пуль тинех.
Çĕнĕ çулăн çутисем
Илĕртеççĕ кашнинех.

***Давид ДАНИЛОВ,***
***2 класс.***

## Автан тĕлĕнни

– Ăçталла каян, автан?
– Картишне каймалла ман.
– Унта санăн мĕскер пур?
– Унта манăн чĕпсем пур.
– Чĕппӳсем мĕскер тăваççĕ?
– Сарă кĕрпе пит ыйтаççĕ.
Кĕрпе илме пӳртелле
Кĕчĕ автан васкаса.



Ак, тамаша! Мĕн вара?
Пӳртре лаша çывăрать,
Сурăх кĕнеке вулать,
Кăвакал нуски çыхать,
Качака кĕпе çăвать.
Ку-ка-ре-ку! – пур вăйран
Кăшкăрса ярать автан.

***Виолета АНДРЕЕВА,***
***2 класс.***

## Аннене

Тавтапуç сана, анне,
Маншăн йăл кулнишĕн,
Пит ятламалла чухне
Ытлашши вăрçманшăн.



Санпа лайăх яланах,
Питĕ ăшă ху та.
Эс киле таврăнсанах
Пирĕн пӳрт çап-çутă.

Сана эпĕ чĕрере
Яланах упратăп.
Çакă çутă тĕнчере
Сана эпĕ манмăп.

***Арина ПЕГЕЕВА,***
***3 класс.***

## Пулăра

Вырсарни кун ирхине
Илчĕ Ваçук витрине,
Вăрăм çиплĕ вăлтипе,
Кайрĕ пĕве хĕррине.

Утрĕ такăр сукмакпа,
Ял çумĕнчи çырмапа.
Ача кунта пит нумай,
Пул тытаççĕ пĕрех май.



Ваçук ларать савăнса,
Хай вăлтине сăнаса.
Нумай тытрĕ пуллине:
Шултрине те вĕттине.

Киле кайрĕ каç пулсан,
Пулă тытса ывăнсан.

***Ирина ПЕТРОВА,***
***5 класс.***

## Пукане



Чи юратнă пукане –
Пĕрре çеç вăл манăн.
Унăн куçĕ кăн-кăвак,
Çӳçĕ те сап-сарă.
Кĕпи çав тери хитре,
Пушмакĕ хĕп-хĕрлĕ.
Хĕрлĕ пăнчăсем питре,
Шăрçисем тем тĕрлĕ.

***Татьяна ВАСИЛЬЕВА,***
***4 класс.***

## Саламлатăп

Атте-анне, кукамай!
Эпĕ сирĕнпе пĕрмай.
Саламлатăп праçникпе,
Телей пултăр сирĕнпе!

Пĕлтеретĕп чĕререн
Сире юратни çинчен.
Парнелетĕп парнесем –
Ырă сунăмпа вĕсем.



Ялан пулăр сывлăхлă,
Çулсем пулчăр ăнăçлă.
Кӳрентермĕп нихăçан
Чĕререн юратнăран!

***Татьяна НИКИФОРОВА,***
***5 класс.***

## Пирĕн йăмăк

Манăн пĕчĕк йăмăк пур,
Вăл Викуля ятлă.
Пĕчĕк çеç хăй, пăх та кур –
Питĕ тăнлă, ăслă.

Манăн чун та савăнать
Викăпа пулсассăн.
Çăлтăр та çӳлтен анать
Йăмăк йăл кулсассăн.

Тĕлĕкре те вăл кулать,
Эпир савăнатпăр.
Ирпе çывăрса юлать,
Таврăнсан вылятпăр.



Викăпа килĕштерсе
Пурăнатпăр туслă.
Вăл пуртан хĕпĕртесе
Эпир пит хаваслă.

***Анна ПЕТРОВА,***
***5 класс.***

## Вăрçă ветеранне

Ку хăрушлăх такăнтарнă,
Пурнăç йывăр пулнă.



Фашистсем урса тустарнă,
Çĕр-шыва аркатнă.

Халĕ пирĕн пурнăç – ырлăх,
Ӳлĕм лайăхланĕ.
Çаваншăн сан пултăр сывлăх,
Вăрçă ветеранĕ!

***Вячеслав ВЛАДИМИРОВ,***
***6 класс.***

## Кукамай

Манăн хаклă кукамайăм,
Сана ăшшăн юрататăп!
Ир-ирех эсĕ тăратăн,
Тутлă пăтă янтăлатăн.



Ĕçлесе те ывăнмастăн,
Ман çинчен те эс манмастăн.
Каç пулсан вырăн саратăн,
Халапсем ярса паратăн.

***Эдуард КАЗАНЦЕВ,***
***6 класс.***

## Пулăшу

Вăйсăртарах ват çынсем



Пулăшу ыйтаççĕ.
Вăй питти çеç çамрăксем
Пулăшма васкаççĕ.

Ватă çынна курсанах
Пулăшма шутлаççĕ.
Ветерансем савăнсах
Тав тума пуçлаççĕ.

Вăй питтийĕ ваттине
Пулăшать пулсассăн,
Вара ватă çынсене
Туйăнать пурнассăн.

***Павел ФЕДОРОВ,***
***6 класс.***

## Чее Барсик

Пирĕн килте кушак пур.
Барсик ятлă, кил те кур!
Вылямашкăн пит ăста,
Çитмен вырăн çук тата.



Пит чее-çке куçĕсем,
Чăрмалаççĕ чĕрнисем.
Шăши тытсан мухтанать,
Пире килсе кăтартать.
Юрататпăр Барсике,
«Мăр-мăр», – текен Мăрсике.

***Данил СКВОРЦОВ,***
***6 класс.***

## Çĕнĕ çул уявĕ

Спортзала лартса та хучĕç
Пысăк елка уява.
Теттесем çакса тултарчĕç –
Кил те кур карнавала.

Ак уявĕ те пуçланчĕ,
Пур ача та костюмпа.



Хĕл Мучи вĕçтерсе çитрĕ
Хĕрлĕ пысăк сумкăпа.

Ах, юрларĕç, ах, ташларĕç
Капăр чăрăш тавралла.
Чунтан савăнса йăл кулчĕç
Ачасем Çĕнĕ çулта.

***Динара МАКСИМОВА,***
***6 класс.***

## Çуркунне

Асамлă, ырă çуркунне
Çывхарчĕ пирĕн кил умне.
Тавралăха вăл ăшăтать,
Çурхи кунпа савăнтарать,
Вăрман çийĕн утса каять,
Хитрелĕхне сапса ярать.
Çеçке те çурчĕç чечексем,
Мĕнле чипер-çке халь вĕсем!
Шыв-шур пуçларĕ юрлама,
Унта-кунта шăнкăртатма.
Çӳлте пуçланчĕ:
«Тăр-тăри!»
Эсир ăна халь куртăр-и?
Тухатăп эпĕ çарана,
Çуркуннене алă пама.
Чечеклĕ çутă çуркунне!
Епле мухтамăн ун кунне?



***Женя ИВАНОВА,***
***9 класс.***

# Моцарт пилĕк çултах менуэт çырнă



Моцарт Вольфганг Амадей – 1756-1791 çулсенче пурăннă Австри композиторĕ. Унăн тĕлĕнмелле пултарулăхĕ питĕ ир палăрнă. Пилĕк çултах вăл менуэт çырнă, улттăрах Бавари курфюрсчĕ тата Австрири патша майри валли клавирпа вылянă. Арçын ачан аппăшĕ те, Мария Анна (Наннерль), ăста клавесинçă пулнă. Ачисен пултарулăхне аталантарас тата çапла майпа укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатас тесе Леапольд Моцарт вĕсене пĕчĕк çес Зальцбург хулинчен илсе тухса пĕтĕм тĕнчене кăтартма тĕв тунă.

1763 çул ва££инче Моцарт çемйи Европа çĕр-шывĕсем тăрăх çул çÿреве тухать. «Асамлă ачасен» ÿнерĕпе Париж, Лондон тата Германипе Нидерландăн хăш-пĕр хулин аристократĕсем паллашаççĕ. Çак вăхăтра Моцартăн малтанхи симфонийĕсем, сонатисем çуралаççĕ. Моцартсем Зальцбурга 1766 çул вĕçĕнче таврăнаççĕ. Часах çак хулари университетра композиторăн пĕрремĕш театр хайлавĕн («Аполлонпа Гиацинт» латинла интермеццо) премьери иртет.

1770 çулта Моцарт Европăри чи паллă педагог, Дж.Б. Мартини (Падре Мартини) патне вĕренме çÿрет. Ăна Болонскри Филармони академине илеççĕ. Кунта вăл Милан валли «Митридат, Понт патши» опера-сериа çырать. Каярах Миланра вăл «Альбăри Асканио» сереината тата «Луций Сулла» опера-сериа лартнă, хăй итальян опера стильне лайăх пĕлнине ăнланса илнĕ.

Моцарт кĕввисене итлесен чунра ырă туйăм çуралать, мĕн пур йывăрлăх çинчен манса турă панă кашни кунпа савăнса кăна пурăнас килет.

## Хăш-пĕр самантсем

### Ахаль йышши вундеркинд

Моцарт вундеркинд пулни паллă: тăватă çултах вăл клавир валли пĕрремĕш концерт çырнă. Сăмах май, çак ĕçе тума питĕ йывăр пулнă, ăна Европа виртуозĕсенчен хăшĕ те пулин лартса пама пултарасси иккĕленÿллĕ. Юратса пăхакан ашшĕ пĕчĕк ывăлĕнчен нотăсен пĕтереймен çырăвне туртса илсен тĕлĕннипе кăшкăрса янă:

– Ку концерт питĕ йывăр-çке, ăна никам та лартса параймĕ!

– Пустуй калаçатăн, атте! – хирĕçленĕ Моцарт. – Ăна пĕчĕк ача та выляса парĕ. Тĕслĕхрен, эпĕ.

### Йывăр ачалăх

Моцарт ачалăхĕ музыкăна вĕренсе тата концерт лартсах иртсе кайнă. Çак «асамлă» ача Европăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи аристократсен йышне хупă куçпах клавирпа каласа тĕлĕнтернĕ. Ашшĕ унăн питне те, клавиатурине те хура тутăрпа хупланă.

Пĕррехинче концерт вăхăтĕнче сцена çине ăнсăртран кушак чупса тухнă... Моцарт выляма пăрахса ун патне ыткăннă. Куракансем çинчен мансах пĕчĕк гений чĕр чунпа айкашма тытăннă. Ашшĕ тарăхса кăшкăрнине хирĕç вăл:

– Ну, атте, кăштах тăхта-ха, клавесин ниçта та каймĕ, кушак вара тарать... – тенĕ.

### Тав тăвас тесе

Пĕчĕк Моцарт император керменĕнче концерт лартнă хыççăн эрцгерцог хĕрĕ Мария-Антуанетта ăна хăйсен чаплă çуртне кăтартма шут тытнă. Пĕр залĕнче арçын ача шуса ÿкнĕ те Мария-Антуанетта ăна çĕкленме пулăшнă.

– Эсир манпа ытла та кăмăллă... – тенĕ çамрăк кĕвĕ ăсти. – Ахăртнех, эпĕ сире качча илĕп.

Хĕр ача çакна амăшне каласа панă.

– Мĕншĕн эсĕ пирĕн хĕрĕме качча илесшĕн? – кунарах ыйтнă император арăмĕ авланас текен арçын ачаран.

– Тав тăвас тесе, – пулнă хурав.



### Пĕрин нотăсем пуçа килеççĕ, теприн – сăвăсем...



Пĕррехинче çичĕ çулти Моцарт Майн çинчи Франкфуртра концерт панă. Вĕçĕнче ун патне вун тăваттăри арçын ача пырса сăмах хушнă.

– Эсĕ питĕ лайăх вылятăн! – тенĕ вăл çамрăк музыкçăна. – Эпĕ нихăçан та ун пек пултараймăп.

– Мĕн эсĕ! – тĕлĕннĕ пĕчĕк Вольфганг. – Ку питĕ ансатçке. Эсĕ нота çырма хăтланса пăхман-и?.. Ну, пуçа килекен кĕвве çырса хума...

– Пĕлместĕп... Манăн пуçа сăвăсем кăна килеççĕ...

– Вăт ку япала! – савăнса тĕлĕннĕ арçын ача. – Сăвă çырма питĕ йывăр пуль?

– Çук, çăмăл. Эсĕ хăтланса пăх...

Моцартпа калаçаканни çамрăк Гете пулнă.

### Мĕнле сăмах пуçармалла-ши?

Пĕрре çапла Зальцбургри аслă пуçлăх пĕчĕк Моцартпа калаçса пăхма шут тытнă. Арçын ача çав вăхăт тĕлне тĕнчипе палăрма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Анчах унпа мĕнле сăмах пуçармалла-ши? Чаплă çынна «эсĕ» теме аван мар, «эсир» тесен вара арçын ачана ытла та пысăка хунă пек...

Нумай шухăшланă хыççăн пысăк чинлă этем мĕн тумаллине тавçăрса илетех.

– Эпир Англире тата Францире çÿренĕ-и? Пирĕн пысăк ăнăçу пулнă-и? – ыйтать вăл чапа тухнă арçын ачаран.

– Эпĕ унта пулнă-ха, сударь. Вăт сире, чăннипе каласан, Зальцбургра кăна куртăм, – тенĕ тÿрĕ кăмăллă Вольфганг.

### Академик ыйтнипе

Çичĕ çулта Вольфганг хăйĕн пĕрремĕш симфонине, вун иккĕре «Бастьенпа Бастьена» ятлă пĕрремĕш оперине çырнă. Болонск академине çирĕм ултă çул тултармасăр никама та илмен. Моцарт вундеркинда вара йышăннă. Вăл вун тăватă çултах академик пулса тăнă.

Ашшĕ çак ятпа саламланă чухне ывăлĕ çапла ыйтнă:

– Халĕ, хаклă атте, эпĕ академик чухне, манăн ахаль кăна урăлса çÿреме юрать-и?

### Ылтăн кача рыцарĕ

Ватиканра Аллегри икĕ хор валли çырнă тăхăр сасăллă кĕвве çулталăкра пĕрре çес лартса панă. Рим Папи хушăвĕпе çак хайлава тĕплĕ упранă, никама та кăтартман. Моцарт вара ăна пĕрре итленипех ас туса юлма пултарнă. Çак нотăсене вăл аппăшне Наннерле парнелеме тĕв тунă.

«Çаратнине» пĕлсен Рим Папи шутсăр тĕлĕннĕ. Нота çырăвĕ питĕ хÿхĕм, пĕр кăлтăксăр пулнине курсан Моцарта Ылтăн кача рыцарĕн орденĕпе чысланă.

### Ку аккорда мĕнле илмелле?

Пĕррехинче Моцарт Сальерирен тăрăхласа илме шухăшланă.

– Эпĕ клавир валли çав тери кăткăс япала çыртăм. Ăна мансăр пуçне никам та лартса параймасть, – тенĕ вăл юлташне.

– Моцарт, кăна эсĕ те лартса параймастăн! – кăшкăрса янă Сальери нотăсене курсанах. – Кунта икĕ алă та хутшăнмалла-çке. Шăпах çав вăхăтра клавиатура варринче темиçе нота илмелле! Урапа вылясан та ĕç тухмĕ – ытла та пысăк хăвăртлăх кирлĕ...

Моцарт кулса янă, клавир умне ларнă та пьесăна мĕнле çырнă, çапла выляса панă. Клавиатура варринчи йывăр аккорда вара... сăмсипе илнĕ!

### Пĕр-пĕринпе вăшават

Моцартăн сывăх юлташĕсенчен пĕри шÿтлеме юратнă. Композитора пысăк тĕрке ярса панă вăл. Шалта вара чĕркемелли хут тата пĕчĕк çыру çеç пулнă, унта çапла çырнă: «Хаклă Вольфганг! Эпĕ чĕрĕ тата сывă!»

Темиçе кунтан шÿтлевçĕне йывăр та капашсăр ещĕк килсе параççĕ. Шалта пысăк чул выртнă иккен, ун çине çапла çырнă: «Хаклă тус! Санăн çырăвна илсенех çак чул манăн чĕре çинчен йăтăнса анчĕ!»

### Моцарт ыйткалакана ыр туни

Вена урамĕнче композитор патне пĕр ыйткалакан пынă. Моцарт укçа чиксе тухман иккен, телейсĕрскере вăл кафене чĕннĕ. Сĕтел хушшине ларсанах кĕсьерен хут кăларнă та темиçе çеккунтра ун çине менуэт (çавăн ятлă бал ташшине валли хатĕрленĕ кĕвĕ) çырнă. Моцарт çак ĕçе чухăна панă та пĕр издатель патне кĕме сĕннĕ. Лешĕ каланине итленĕ, хăйне ăнăçма пултарасса пур пĕрех ĕненмен. Издатель хут таткине илнĕ, менуэта пăхса тухнă та... чухăна пилĕк ылтăн укçа панă, кун пек ĕçсене татах илсе килме ыйтнă.

### Композитор çапла каланă...

*Турă хыççăнах атте каять.*
*Патша пулни чыслах мар.*
*Ĕç – манăн пĕрремĕш киленÿ.*
*Эпĕ мухтакансене итлеместĕп. Эпĕ туйăм хыççăн каятăп.*
*Хитре калаçасси – пысăк ăсталăх. Анчах хăçан чарăнмаллине те пĕлмелле.*
*Тăвăллăн алă çупчăр тесен е такам та юрлама пултармалла ансат, е пĕр йĕркеллĕ çын та ăнланмалла мар çырмалла.*
*Чи хăюллин шанăçĕ пысăкрах.*

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР!

### Тутлă шаркку

**Шарккăва хатĕрлеме чăх какайĕ (кăкăр тĕлĕнчи е икĕ тукмакĕ), 5-6 çĕр улми, 1 кишĕр, 1 пуç сухан, 2 кашăк çăнăх, тăвар тата лавр çулçи кирлĕ.**

Какая вăтам татăксене вакламалла та вĕтетнĕ кишĕр, сухан хушса тип çупа ăшаламалла. Çĕр улмине шултăра тураса çăнăхпа пăтратмалла.

Çĕр улмипе какая пĕрлештермелле те шыв, тăвар, пăрăç ямалла. Хупласа пăшăхламалла. Пиçес умĕн лавр çулçи хушмалла. Кайран ăна хатĕр çимĕçрен уйăрмалла.

### Духовкăра хатĕрленĕ фри çĕр улми

**1 килограмм çĕр улми, 1 чей кашăкĕ тип çу, çавăн чухлех тăвар, пĕр чĕптĕм хĕрлĕ пăрăç кирлĕ.**

Çĕр улмине хуппинчен тасатса тăваткăлласа турамалла та çупа, тăварпа тата пăрăçпа пăтратмалла. Тимĕр ывăс çине хурса 230 градуса çити хĕртнĕ духовкăра хăмăрланиччен çур сехет тытмалла.

### Хачапури



**1 стакан йӳçĕтнĕ сĕт, 300 грамм тăпăрчă, кăштах сыр, икĕ ыхра шăлĕ, çăнăх, çур чей кашăкĕ тăвар, апат соди тата сахăр песокĕ илĕр.**

Йӳçĕтнĕ сĕте тăварпа, песокпа тата уксуспа сӳнтернĕ апат содипе пăтрататпăр. Çăнăх хушса çемçе чуста çăратпăр та çур сехетлĕхе хупласа хуратпăр.

Унтан чустана тăватă пая уйăрса пашалу евĕр йĕтĕрлетпĕр. Пашалусем çӳхе пулччăр.

Хачапурин ăшне хума тăварланă тăпăрча теркăпа хырнă сырпа тата ыхрапа пăтрататпăр. Пулнă хатĕре пашалăвăн варрине хурса чуста хĕррисене пĕрлештерсе çыпăçтаратпăр. Кукăльсене кăшт лапчăтатпăр та хулăн тĕплĕ, типĕ çатмара икĕ енчен хĕреличчен 10 минут ăшалатпăр.

### Швейцарилле пăшăхланă çĕр улми

**14-18 çĕр улми, 300 грамм хытă сыр, 1-2 стакан сĕт е çăра сĕт (сливки), кăштах тăвар тата пăрăç кирлĕ.**



Çĕр улмине лайăх çуса хуппинчен тасатмалла та кашнине темиçе çĕртен каса-каса тухмалла.

Çĕр улмине формăна хумалла та тăварпа пăрăç сапмалла. Унтан сĕт ямалла. Фольгăпа е хупкăчпа хупласа 200 градуслă вĕри духовкăра 20 минут пăшăхламалла.

Сырăн пысăк пайне çӳхе татăксем çине вакламалла. Юлнине теркăпа хырмалла. Çӳхе татăксене çĕр улмин çемçелнĕ пайăркисем хушшине чикмелле, вĕтетнине çиелтен сапмалла. Тепĕр 10-15 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Сырпа тата хăймапа хатĕрленĕ чăх тукмакĕсем

**Ку çимĕç валли 10-15 чăх тукмакĕ, 100 грамм сыр, 100-150 грамм хăйма, 4-5 ыхра шăлĕ, тăвар тата хура пăрăç кирлĕ.**

Çунă тукмаксене тăвар-пăрăçпа тата вĕтĕ теркăпа хырнă ыхрапа пăтратса хатĕрленĕ хăйма ăшне чиксе кăларатпăр. Çупа сĕрнĕ тимĕр ывăса хуратпăр та çиелтен теркăпа вĕтетнĕ сыр сапатпăр. 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 30-40 минут пĕçеретпĕр.

### Вĕри бутерброд

**Пĕр батон, майонез, 2-3 помидор, 200 грамм сыр, çур кило сосиски, тип çу кирлĕ пулать.**

Батона хулăнрах татăксене касмалла. Сыра теркăламалла. Сосискăна тăваткăлласа вĕтетмелле. Помидора çавракан-çавракан турамалла.

Помидорсăр пуçне пур çимĕçе те хутăштармалла.

Батон татăкĕсем çине малтан помидор вара ытти çимĕçе хумалла. Çиелтен сырпа сапмалла. Бутербродсене çу сĕрнĕ тимĕр ывăса хурса духовкăна лартмалла. Сыр хĕреле пуçласан кăларма юрать.

### Хăпарту

**Хăпарту валли çур килограм тăпăрчă, 1 банка çăратнă сĕт, 3 çăмарта кирлĕ.**

Малтан çăмартапа çăратнă сĕте хутăштаратпăр, унтан тăпăрчă хушса лайăх пăтрататпăр.

Пулнă хатĕре формăна яратпăр та 160 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40 минут лартатпăр. Хĕрелсен кăларатпăр.

## Чи кирли – çӳçе тĕрĕс пăхни



Хитре, вăрăм, илемлĕ йăлтăртатакан çӳç – хĕр ача, хĕр, хĕрарăм капăрлăхĕ. Ăна яланах таса та сывă тытма тăрăшмалла, асăрхасах тăмалла – типсе хуçăлакан, йӳпленнĕ вĕçсене кастармалла, тĕрлĕ маскăпа тутлăхлатмалла. Чи кирли – çӳçе тĕрĕс пăхни. Кунта вара пире ятарлă специалистсем çеç канаш пама пултараççĕ. Çавна май, чиперуксем, **Шупашкарти "Алла" салонра ĕçлекен Инна СОРОКИНА** парикмахер кирлĕ сĕнӳканашпа пулăшма кăмăл турĕ.

– Чăн малтан çӳçе тĕрĕс çума вĕренмелле, хăвăра килĕшӳллĕ шампунь суйламалла. Çӳçе çунă хыççăн сивĕрех шывпа чӳхесен лайăхрах, ун пек тусан вăл ытларах йăлтăртатĕ. Шампунь туяннă чухне унăн тĕсне тата шăршине тимлемелле – янкăр çутă е çутă тĕслисене суйлăр. Мĕншĕн тесен вĕсенче хими сахалтарах. Шампуне тăтăшах улăштарсан та лайăх. Ялан пĕринпе усă курмалла мар.

Сивĕ çанталăкра калпак тăхăнмалла, çӳçе кăларса çӳремелле мар, мĕншĕн тесен вĕсем шăнаççĕ, типеççĕ. Хĕлле час-часах В витамин хушнă, нӳрĕклетекен маскăсем тумалла. Витамина аптекăра туянма пулать.

Эпĕ сире горчицăран хатĕрленине туса пăхма сĕнетĕп. Ун валли пĕр апат кашăкĕ типĕ горчица, пĕр чей кашăкĕ сахăр песокĕ е пыл, çавăн чухлех олива е урăх косметика çăвĕ, пĕр çăмарта сарри тата пĕр апат кашăкĕ ăшă шыв кирлĕ. Пурне те пăтратмалла та пуçа сĕрсе çур сехет тытмалла. Кайран шампуньпе лайăх çумалла. Ку маскăна мунчара тумалла. Ăшăпа усси витĕмлĕрех.

Çӳçĕн йӳплĕ вĕçĕсене асăрхарăр тăк вĕсене çийĕнчех кастармалла. Мĕншĕн тесен ку вĕсене ӳсме чăрмантарать.

Пĕтĕмĕшле илсен пурин валли те пĕр шампунь, пĕр маска каймасть. Кашнин валли тĕрлĕрен кирлĕ.

## СĔНӲСЕМ

**Пит çинчи хура пăнчăсенчен халăх меслечĕпе хатĕрленĕ маскăсемпе те хăтăлма пулать:**

●мамăка супăнь кăпăкĕпе йĕпетмелле, вара вĕтĕ тăвар сапмалла. Унпа пите 1-2 минут çавра-çавра сăтăрмалла. Тăвар кристалĕсем çу парĕсене уçма пулăшаççĕ, пухăннă çу-салăран хăтараççĕ. Пите тасатнă хыççăн спирт лосьонĕпе сăтăрмалла, унтан шывпа çумалла. Çак процедурăна эрнере 2-3 хутчен тума юрать.

**Ура тарласан:**

●урасем вăйлă тарласан вĕсене сивĕ шывра йĕпетнĕ губкăпа, чĕркуççирен пуçласа пӳрнесем таран сăтăрмалла. Унтан лайăх типĕтмелле те ăшă нуски тăхăнмалла.

**Алăсем валли – тутлăхлă маска:**

●пĕр чей кашăкĕ пыла тата 2 апат кашăкĕ хăймана икĕ кашăк ăшă шывпа хутăштарса алăсене сĕрĕр те 15-20 минут тытăр.

**Ӳте якатас тесен:**

●ку маска пит çинчи хура пăнчăсенчен хăтăлма пулăшать, шăтăксене пĕрĕнтерет, вĕсене тасатать, ӳте якатать.

*Ăна хатĕрлеме икĕ апат кашăкĕ рис кĕрпине вĕретнĕ шывпа хутăштармалла. Шыв кĕрперен кăшт нумайрах пултăр. Хатĕре çĕр каçма хăвармалла. Ирхине çемçелнĕ риса вилкăпа е кашăкпа нимĕрлемелле, ытлашши шыва сăрăхтармалла. Унтан "пăтта" пите сĕрмелле те 15 минут тытмалла. Хыççăн сивĕ шывпа çуса ямалла.*

## Ирхине вăрансанах хитре пулма

***Ыйхăран вăраннă хыççăн чылай чухне илемленсе, капăрланса тăма вăхăт çукрах – пĕрин вĕренме, теприн ĕçе васкамалла. Тепĕр чухне пит çинче минтертен хĕрлĕ йĕрсем юлаççĕ, куç айĕ шыççăнни те пулать. Ку вара пачах та илемсĕр курăнать. Пит-куç ирхине хитрелĕхпе çиçтĕр тесен çак сĕнӳсене пăхăнмалла.***

1. Çывăрма выртас умĕн 15-20 минутлăха чӳречене уçса пӳлĕме уçăлтарăр. Ку ыйха лайăхлатма пулăшĕ. Уçă сывлăш ӳт-пӳшĕн те усăллă.

2. Пит-куçа ирхине кăна мар, каçхине те лайăх çуса тасатăр. Кремпа усă куратăр тăк ăна кăшт çеç сĕрĕр.

3. Каç енне чей, кофе тата ытти шĕвеке нумай е пачах та ĕçмелле мар. Çавăн пекех тăварланă апат-çимĕç те ан çийĕр, мĕншĕн тесен вĕсем организмри ытлашши шĕвеке тытса тăраççĕ. Çак икĕ правилăна пăхăнсан пит-куç шыççăнни аптăратмĕ.

4. Каçхине 16 сехет хыççăн кофе ĕçме юрамасть, кофеин нерв системине ытлашшипех çĕклентерет, вăй хушать. Çакна пула ыйхă вĕçсе каять.

5. Çывăрма выртас умĕн çӳçе пуçтарма кирлĕ мар, кирек мĕнле тыткăч та ăна сиен кӳрет. Пуçа пурçăн тутăр çыхма юрать. Вăрăм çӳç арпашăнса пĕтесрен пушăрах çивĕтсем тăвăр.

6. Минтерсем ытла çӳллĕ тĕк вĕсене аялarах антарăр. Матрас хытă та тикĕс пулмалла. Ку çурăм шăмми кукăрăлнинчен сыхлать. Ытларах çурăм çинче çывăрма тăрăшмалла.

7. Ирхине лимон хушнă симĕс чей ĕçсен ыйхă хăвăртрах иртсе каять. Кăштах шăккалат çисен те кăмăл-туйăм çĕкленет.



# Салтак пурнăçĕ

**Калав**

**Геннадий ЭСЕКЕЛ**

**(Малалли.
Пуçламăшĕ 4-7-мĕш номерсенче).**

Столовăя тухса утрăм. Ирхи апата хура тул пăтти пĕçернĕ. Кĕрпине лайăх тасатманран тĕл-тĕл темле çўп-çап курăнать. Пăтăра аш-пăш сахалли куç çĕрет. Зала тухса савăт-сапа тасалăхне тĕрĕслерĕм – йĕркеллĕ. Кухньăна тепĕр хут кĕрсе пăтăра аш-какай сахаллине систертĕм. Повар ик аллине сарса «эп хуçа мар» тенĕн питне-куçне пĕркелентерчĕ. Столовăй заведующийĕ çак самантра вырăнта çукчĕ-ха. Апат пахалăхĕшĕн журналта алă пусмалла. Эп каллех зала тухрăм. Ротăсем апата килме пуçланă, юрлани илтĕнет.

Заведующий – Держиморда старшина сверхсрочник. Вăл килнĕ. Кухньăра унăн кăмăлсăр калаçăвĕ илтĕнет. Эпĕ апат валеçекен амбразура патне пырса старшинана апатра аш-какай çителĕксĕррине пĕлтертĕм. Кăна илтсен старшинан куçĕ тĕлĕннипе çамки çине хăпарчĕ тейĕн. Ытла тарăхнипе, хĕрелсе кайнăскер, çăварне уçса сăмах калаймасть.

– Пăтта аш-какай консерви çителĕклĕ хуман, – татăклăн каласа хутăм çаплах çăварне уçайман старшинана.

– Пĕчĕк хурансене сĕтелсем çине лартма ирĕк памастăп. Алă пусасса ан та кĕтĕр. Нормăпа хурса парсан, тархасшăн, валеçĕр. Пурнăçламасан штаба пĕлтеретĕп!

Çав самантра зала салтаксем кĕре пуçларĕç. Пуçланчĕ вара шыв юххи пек, татăлнă пĕверен шарласа юхакан таса марлăх ыткăннă евĕр, çĕрти-çўлти патшалăхран пуçласа атте-анне çумĕнчи хуçалăх патне çитсе пичетленнĕ сăмахсем. Сĕтелсем хушшине вырнаçнă салтаксем апат кĕтеççĕ...

– Тепĕр çур норма какай консерви хушмасан алă пусмастăп, – пулчĕ ман сăмах.

Держиморда ман çине амбразурăна та шăнăçман тачка пит-куçĕпе пăхса тăнă хыççăн кăрт-карт турткаланса илчĕ те пушă баксем еннелле сулăнчĕ. Пытарнă консерв банкисене кăларчĕ те ман умрах пăтă хуранне чăмтарчĕ. Тикĕссĕн хутăштарчĕ поварĕ пăтта. Алă пусса патăм. Повар-салтак ман çине темĕнлерех пăхса пўрнине тăнлавĕ патне тытса кăтартрĕ. Куçне Держиморда енне куçарчĕ.

– Сирĕн килпетсĕр хăтланăва аслă врач урлă полк командирĕ патне çитеретпĕр, – хуравларăм Держиморда çине йĕрĕнчĕклĕн пăхса.

– Юлашки хут тĕрĕслеме килетĕн ак. Прохоренко фельдшер сан пек мар, унпа калаçса татăлма пулать... – мăкăртатрĕ вăл сăмси айĕнче.

– Курăпăр, Держиморда старшина, – хушса хутăм ун çине шăтарасла пăхса.

Урнă вăкăрăнни пек хĕрелнĕ сăн-пуçĕ, центнер таякан кĕлетки чĕтренсе илчĕ. Туласа тăкасла ман хыçран пăхса юлчĕ. Салтаксем çăвар тулли кулчĕç. Вăл хăйĕн хушаматне чăтма пултараймасть иккен. Апат валеçме пуçларĕç.

Пăсăк кăмăлла батальона кĕтĕм. Хуçалăх взвочĕн ертўçи çуккипе взвода апата манăн ертсе каймалла пулчĕ. Сĕтелсем çинче йĕркелĕх. Хура тул пттине чашăксене антарсанах юлташсем тĕлĕнчĕç – пăтăра аш çителĕклĕ. Услам çу порцийĕ те нормăпа. Эп ним те шарламарăм. ПМП-на таврăннă дежурство малалла тăсăлать. Санитарсем чирлисем валли апат илсе килчĕç. Ман пата пырса тав турĕç.

– Мĕнле сăлтавпа мана тав тăватăр? – тĕлĕннĕн кăтартрăм хама.



– Паян апат пахалăхĕ кирлĕ шайра, – сăмахларĕ белорус каччи Полищук. – Прохоренко дежурнăй чухне столовăй апачĕ сĕтексĕр.

– Апат апатах пулĕ ĕнтĕ, кĕрпи, аш-какайĕ çавсемех-çке?

– Çаплине çапла, анчах уйрăмлăхĕ куç кĕрет. Прохоренко дегустацие кайсан таврăннă чухне унăн кашни кĕсйи мăкăрăлса тăрать. Вара эпир курмăш кĕтесре аш-пăш е çупа çăкăр çăвар тулли çисе ларать.

– Ан тĕлĕнтер-ха, ĕненес килмест. Чăнах та-и?

– Малашне пĕлсе çитĕн, – тавăрчĕç пирĕн калаçăва хутшăннă ытти санитарсем те.

Салтак пурнăçĕнче те гражданкăри пекех хăйне майлă хаваслă е хурлăхлă самантсем пулса иртеççĕ. Эпĕ каллех медпунктра дежурствăра. Вырсарни кун. Вербицкий тухтăр командировкăра. Вăл икĕ эрнелĕхе кайнă. Эпĕ паян дежурствăра иккĕмĕш батальон врачĕпе Пинчукпа. Вăл кăшт ларсанах килне тухса шăвăнчĕ. Йышăнăва килекен салтаксен пачах çук. Увольнени тухнисем каçченех хулара çўреççĕ. Кăнтăр апачĕ çитрĕ. Столовăйра апат пахалăхне тĕрĕслерĕм. Держиморда ман çине каçармасла пăхса илчĕ те сăмси айĕпе тем мăрлатрĕ. Апатне кирлĕ шайра хатĕрленĕ. Ун мăкăртатăвне илтмĕш пулса алă пусса патăм. Вăл ман ума пĕр чашăк сысна ашĕ лартса хучĕ. Эп ун парнине курмăш пулса кухньăран тухса утрăм. Хирĕç пĕрремĕш батальон апата килет. Чăваш çамрăкĕсем мана чăвашла саламларĕç. ПМП-на çитнĕ çĕре Самар каччи хашкаса пырса кĕчĕ. Хăй шап-шурă сăнлă. Ординаторскине мĕн сăлтавпа килнине тĕпчерĕм. Анчах апата утатчĕ-çке. Вăл гимнастеркине хыпаланса хыврĕ те пĕчĕк суран вырăнне кăтартрĕ. Пралук çине пырса тăрăннă имĕш. Эп, паллах, ĕненмерĕм. Пирĕн хулара нимле пралук та йăваланса выртмасть, столовăй йĕри-тавра таса та тирпейлĕ. Тĕрĕс те чăн хурав илтмерĕм. Мĕн тумалла? Суранĕнчен юн тухнин палли те çук. Кушетка çинче лараканскере выртартăм кăна вăл тăнран кайрĕ. Паллă, юн хырăма тулнă. Часрах госпитале ăсатмалла.

Чаçри васкавлă пулăшу машини яланах хатĕр ларать. Салтака вырттарса мар, ларса пымалли мелпе ăсатрăм. Çул çинче вăл тĕрĕссине пĕлтерчĕ: апатланнă вăхăтра хĕр пирки харкашу пуçланă. Увольненире вăл юлташĕн хĕрĕпе тĕл пулнă. Хăйсем иккĕшĕ те Самар каччисем. Хĕрĕ çак чипер качча юратарах панă иккен. Юлташĕ хĕрсе кайнă самантра кăна хырăмĕнчен çĕçĕпе чикет...

Салтак полка пĕр уйăхран таврăнчĕ. Миçе салтака госпитале ăсатман-ши? «Шуйттан кустăрми» карусель çине сыхăнмасăр ларакансем урисене хуçаççĕ, турник çинчен мелсĕр сиксе пилĕкĕсене хускатни темиçен, апендицитпа аптăранисем... Тĕрĕс диагноз лартма пултарнине шута илсе Фролов майор мана тухтăра вĕренме ялан ўкĕтлет. Паллах, служба хыççăн ĕнтĕ.

Кĕрхи учени çитрĕ. Пире Смоленск облаçĕнчи пĕр хула çывăхне АН-12 самолетран персе хăварчĕç. Шăп çак хула çывăхĕнче Днепр шывĕ хĕррипе «Война и мир» кинофильм ўкернĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнсем. Хуларан вунă çухрăмра, вăрман ăшĕнче, Мускав çар округĕн стрельбищи. Рязань полкĕн артиллерисчĕсемпе санинструктор пулма мана Фролов çураçтарчĕ. Пине яхăн салтакпа офицер вăрман ăшĕнче палаткăсенче пурăнатпăр. Пĕр эрнерен Рязань хулинчи артиллеристсене стрельбищĕне юсама хăварчĕç. Эпĕ артиллери командирĕ Шарагин подполковник çинчен илтнĕ, анчах хăйне лайăх пĕлместĕп. Манăн пĕр пĕлмен-палламан салтаксемпе хутшăнмалла. Офицерĕсене Рязаньте те тĕл пулман.

Шарагин подполковник хăйĕн салтакĕсене пухса строя тăратнă. Эпĕ те строй вĕçĕнче вырăн тупрăм. Манăн вĕсемпех пулмалла. Подполковник, хальччен мана курманскер, паллашма ума пырса тăчĕ. Эпĕ ăна хам кам пулнине пĕлтертĕм. Ман çине икĕ метртан та çўллĕрех тĕлĕнмелле хыткан, «Освенциум» лагерĕнчен тухса тарнă тыткăнри салтака аса илтерекен этем тăрать. Урисем чăвашсен хăмла шалчине аса илтереççĕ. Паллашрăмăр.

Тепĕр икĕ кунран артиллеристсене аякри стрельбищене илсе кайрĕç. Подполковник мана лагере хăварчĕ. «Санăн хуларан почта илсе килмелле пулать», – хушрĕ вăл. Виçĕ çухрăмри хулана çуранах кăнтăр тĕлне кайрăм. Почтăра Шарагин ячĕпе çыру тыттарчĕç. Хĕрĕнчен. Лагере таврăнсан çак çырăвĕ хăй патне часрах çиттĕр тесе стрельбищĕне каякан икĕ çамрăк лейтенантран парса ятăм. Лейтенантсем çырăва уçса вуланă пулать. Тепĕр кунне каçпа чаçе таврăннă артиллеристсем Шарагин мана шутсăр çиленнине систерчĕç. Офицерсем ун çырăвне эпĕ уçнă тесе каланă иккен. Анчах хăй мана пĕр сăмах та шарламарĕ. Ырă шухăшлă мар куçпа çеç пăхса илчĕ. Тепĕр кун ирхине вĕсем стрельбищене зачетпа кайрĕç. Çул каллех хулана выртрĕ. Хальхинче почтăра Шарагин ячĕпе телеграмма тыттарчĕç. Почтăна паллакан офицер та пынă. Вăл перĕве васкать. Телеграмми ырă мар шухăшлă пулĕ тесе ăна Шарагина алранах тыттарма сĕнтĕм çав офицера. Часрах хăй патне çиттĕр терĕм-çке.

Хуларан лагере таврăнатăп. Кунĕ ытла шăрăх. Хĕвел хĕртсе çунтарать. Пăчă. Гимнастеркăна хывса алла илтĕм те Днепр хĕррипе утса пыратăп. Лагере çитесси пĕр çухрăм çеç юлнă. Днепр пĕр çĕрте самай сарлакарах, çав тĕле çитсе шывра чўхенсе тухас шухăшпа хуллен утатăп. Шăп çав вырăнта УАЗик шыв варринчи юшкăна путса ларнă. Малтанхи кун çав вырăнтан груз турттаракан машинăсем каçса çўренине асăрханăччĕ-ха. Апла пулсан вăл тĕлте шыв тарăн мар пулмалла. УАЗикĕ вара темле майпа тепĕр енне каçса каяйман. Тен, ытла васканипе çапла пулса тухнă? Днепр çыран хĕррисем кунта питĕ сĕвек, чăнкă вырăнсен пачах та курăнмаççĕ. Шывăн сарлакăшĕ те 10-15 метртан ытла мар. Ним тума аптăранă водитель йĕпе тумпа унталла-кунталла кумса çўрет. Эп ун патне çитсенех хăйне пулăшма ыйтрĕ. Хывăнса шыва кĕтĕмĕр. Машинăна тем пек тăрăшса тĕртсен те вăл чăхăмланă лаша евĕр пĕрре те вырăнтан тапранмарĕ. Моторĕ ĕçлемест. Каялла тухрăмăр.

– Кама турттаратăн? – вăл салтак тумĕпе пулнине курса кăсăклантăм ним тума аптăранă шофертан.

– Генерала, – сўрĕккĕн тавăрчĕ вăл.

– Ăста вара сан генералу? – йĕри-тавра пăхса çаврăнтăм эпĕ.

Никама та курмарăм.

– Хăвăлăх хыçĕнче. Алли-ури тасамарланчĕ машина тĕртсе. Пилĕк таран йĕпенчĕ.

Генерал тумланса тирпейленчĕ те унталла-кунталла утма пуçларĕ. Утти, хусканăвĕ, хăтланăвĕ такама аса илтерет. Мăйăхĕ те питĕ пĕлекен çынăнни пек.

– Ку генерал каснă-лартнă «Чапай» кинофильмри тĕп героя аса илтерет, – тетĕп.

– Тĕп-тĕрĕсех, – тĕлĕнмерĕ сержант-водитель эпĕ асăрханинчен. – Генерал-майор Александр Чапаев – Чапай ывăлĕ. Вăл Кантемир дивизийĕн командующийĕ. Кунта стрельбищăна килтĕмĕр.

– Днепр леш енне мĕн тума каçмаллаччĕ? Унта каçма сăлтавĕ те çук-çке, – кăсăклантăм хам енчен. – Лагерьсем ку енче.

– Пĕлместĕп. Сăлтавне каламарĕ. Тен уçăлса çўресшĕн пулнă.

– Кунта кунĕпе тăрсан та пулăшу кĕтсе илейместĕн, транспорт çўремест лагерь енне. Лагерьти машинăсем пурте аякри стрельбищĕне салтаксене турттарса кайнă. Санăн хулана çитсе трактор тупмалла. Райкома çитсен тата хăвăртрах пулать. Салтаксем каçхине çеç таврăнаççĕ.

Генерал пирĕн еннелле утать. Эпĕ, пилĕк таран çара салтак, хам çулпа утрăм. Генералпа куçа-куçăн пулас килмерĕ.

Лагерьти салтаксем кăнтăр апатне вăрманти анлă уçланкăри столовăй çывăхне пухăннă. Инçех мар уйрăм чăрăш саркаланса ларать. Апат вăхăчĕ çитиччен темиçе çĕр салтак уçланкăра уçăлса çўрет. Сасартăк пĕр салтак чăрăш тăррине пакша асăрхать. Пурте чăрăш тавра пухăнса хăшĕ кăшкăрать, нумайăшĕ хăлхана çурас пек шăхăрать. Пĕр пуçтах салтакĕ темиçе çĕр çынна харăс кăшкăрса-шăхăрма команда пачĕ. Ян! янрарĕ уçланкă хăрушла сасăпа. Пакша салтаксем умне патлатса ўкрĕ. Вилнĕ. Чĕри çурăлса кайнă пуль...

Пурте тĕлĕнсе пакша вилли çине пăхса тăраççĕ. Хăрушла кăшкăрнинчен тĕлĕннĕ повар салтаксем пухăннă йывăç патне çитсе тăчĕ. Пакша вилли...

– Эсир... эсир фашистсем! – çухăрса ячĕ вăл. – Эп ăна апат çитеретĕп, вăл ман пата килнĕ пулнă...

Салтаксем шăпăрт, пуçĕсене усса саланчĕç. Столовăйран тухсан та намăсланнă çамрăксем сăмахламасăр палаткăсем еннелле утрĕç.

Палланă офицер стрельбищĕрен салтаксем валли кăнтăр апачĕ илме килнĕ. Флягăсене тепĕр салтакпа машина çине тиеççĕ. Шарагин ячĕпе янă телеграммăна ăна тыттаратăм. Çынни шанчăклă пек, çамрăк лейтенант подполковника пĕлет. Телеграмма-çке! Тен, начар хыпар... часрах çитерес килет хуçи патне.

**(Малалли çитес номерте)**

# Хавасла 2014 самант

**Пĕр пек сас паллисене, Ас тусам анчах çакна,**
**Çыхăнтарăр пĕр-пĕрне. Кашнинех пĕр çул кăна.**




**Ăнлантарни:** А точкăран Б точкăна çитес тесессĕн çакăн пек йĕркесене пăхăнмалла.
1. Стрелка – умĕнче тăракан паллă патне тӳрех пырать, анчах та пушă клеткăсем патĕнче çаврăнса пăрăнма юрамасть.
2. Çăлтăрла вырăнта таçталла та (диагональсĕр пуçне) кайма пулать, паллах, кирлех тĕк.
3. Пĕр клетка урлă икĕ хут каçма юрамасть.




**Унталла та кунталла, Ункăна тултармалла,**
**Кăтартаççĕ стрелкăсем. 1-6 цифрăсем...**



## Хĕвел çаврăнăш – Умри пуç ватмăш...

1. Вĕçен кайăк. 2. Юмахри карчăкăн пурлăхĕ. 3. Вырăс писателĕ. 4. Ĕлĕкхи налук. 5. Ят-шыв палли. 6. ...-Барбос. 7. Çĕр улми. 8. Чăваш юрăçи, хĕрарăм. 9. Чăваш çыравçи, П.Енцовăн хушма хушаматĕ. 10. Кăнтăрти йывăç. 11. Хурт-кăпшанкă. 12. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ... Юлаев. 13. Тĕвесен ушкăнĕ. 14. Вырăс юрăçи, ытларах романссем шăрантарать. 15. Пушă. 16. Вăл та салтак аттине тăхăннă, пăттине те тутаннă.



**Мирлĕ атома пайланă, Пуçтарма пĕлсен ăна,**
**Сăмаха йăлтах салатнă... Тупăн эс çав хулана.**




## Сăмах каçмăш



**Сылтăмалла:** 1. Йывăç тĕпĕ. 5. Пыршă – ... 9. Ăна туй хĕрарăмĕ тăхăннă. 10. Виçе. 11. Унпа ура тапса ярăнаççĕ. 12. Кăнтăрти çимĕç. 15. Кӳршĕ республикăри хула. 16. Арçын ячĕ. 17. «Мăнтăр» пулă. 18. Ӳссе çитеймен лаша. 23. Хĕрарăмсен уйăхĕ. 25. Хими элеменчĕ. 26. Кăçалхи çул палли. 27. Хаклă йышши чул. 28. Шыври чĕр чун. 29. Футбол вăййин пĕр пайĕ. 33. Тĕлĕнтермĕш. 36. Унпа яшка пĕçереççĕ. 37. Усламçăсене «саратни». 39. Култаракан. 40. Чечек. 42. Сыватмăшри ĕçчен. 43. Тĕрлĕ енĕпе чапа тухнă çын. 44. Тапăну. 45. Организма кирлĕ япала. 46. Сталин вăхăтĕнчи политик.

**Аялалла:** 1. Хĕрарăм ĕç хатĕрĕ. 2. Англин чапа тухнă адмиралĕ. 3. Ялти «будильник». 5. Çĕр лаптăкĕ. 6. Вăрман çимĕçĕ. 7. Теннисист хатĕрĕ. 8. Хĕç-пăшал. 13. Ял пайĕ. 14. Йытă ăрачĕ. 19. Альфа сас паллинчен чи аякри. 20. Тĕп. 21. Ту таки. 22. Ун çинче чăхсем лараççĕ. 23. Хула хĕрарăмĕ. 24. Çуран чупакан «такси». 29. Чапа тухнă хоккей тренерĕ – Анатолий ... 30. Арçын ячĕ. 31. Вăл шакла пуçа кирлех мар. 32. Спортри очко. 34. Вĕçев хатĕрĕ. 35. Крутов-Ларионов-... 38. Авалхи халăхсен талисманĕ. 39. Вăрмар районĕнчи ял. 40. Стройкăри чарлан. 41. Хĕр-тус.

*Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*